0

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 АПРЕЛ 3 ВЫРСАРНИКУН 76 (4889)-мĕш №

Чăваш Коммунĕ

21-мĕш çул тухать ● ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомĕн хаçачĕ ● Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом. Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторăн 0—67, Ред. заместителĕн 0—88, Редакци секретарĕн 4—40, Дежурнăйăн 6—23

ÇУРАКИНЕ ВĂЙЛĂ ЛАШАСЕМПЕ ТУХАР

Чăваш республикĕнчи йалхуçалăхĕнче малта пыракансен слjочĕ, халăхсен генийĕ çулпуçĕ Сталин йулташ çулсеренех 7—8 мĕлйард пăт тĕштырă туса илесси çинчен панă кăтартăва пурнăçа кĕртме, 1938 çулта пур културăсем тăрăх та пысăк тухăçлă тырпул туса илес тĕлĕшпе социалисăмла ăмăртса ĕçлеме Тутар тата Мордва республикĕсемпе догăвăр туса çирĕплетрĕ.

Ку догăвăр тăрăх республикăн гектар пуçне 100-шер пăтран кайа мар тĕштырă туса илмеле.

Партипе правителствă пирĕн колхозсене лайăх ĕçлеме мĕн кирлине пурне те парса тăраççĕ. Йалхуçалăхĕ çулленех çул вăйлăн машинăланать. 18 машинă-трактăр станци çумне çак çуркуннерен пуçласа татах 2 станци хутшăнаççĕ. Кăçал МТС-сенче пин трактăр ытла ĕçлемеле пулать.

Апла пулин те, йалхуçалăх ĕçĕнче колхозсен лашасемпе пысăк ĕçсем тумалине хакламанни калама çук пысăк йăнăш тупи пулать. Уй ĕçĕсенче, турттарас ĕçсенче епĕр лаша вăйĕпе пысăк усă куратпăр. Куппа пĕрлех лаша выљăхсем çĕршыв оборонине вăйлатас ĕçре те паллă вырăн йышăнса тăнине пĕр минутлăха та манма йурамасть.

Партипе правителствă çĕрĕç оргăнĕсене лаша выљăхсене хакламанни çинчен, пĕрре çеç мар асăрхаттарнă пулин те, ку тĕлĕшпе кăтартусем çителĕклĕ пулнă пулин те, лаша выљăхсене ĕрчетес ĕç социалисмăла выљăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре уйрăмăнах йулса пырать.

Колхоз ĕçĕсенче лаша пичĕ пысăк вырăн йышăнса тăрать. Пур колхозсенче те лашапа ĕçлемели ĕç пичĕ нумай. Тӳрех калас пулать, лашасăр пиммĕнле кирлĕрех ĕçе те тума çук. Çавна кура халăх тăшманĕсем, троцкисла-бухаринла бандитсем, буржуалă-националиссем, шпионсем, диверсантсем—колхозсен лашисене пĕтерес, начарлатас тесе пысăк сăтăрлă ĕçсем тунă. Пĕтĕм Сойузри çĕрĕç работникĕсен канашлăвĕнче В. Молăтăв йулташ çапла каларĕ:

„Колхозсенчи лашасемшĕн вырăнсенчи советсем, чăн малтан—çĕрĕç оргăнĕсем ответлă пулмала. Çакна туса çитерме вăхăт ĕнтĕ: колхоз лаши кирлĕ пек йĕркелĕхре, кирлĕ пек условире пултăр, „анемийа" текен чир сарăлнине хирĕç тата ытти тĕрлĕ сăтăрла киревсĕрлĕхсене хирĕç кĕрешесси сăмахпа мар, ĕçпе пултăр".

В. Молăтăв йулташăн çак кăтартăвĕсене вырăнсенчи советсен, пуринчен ытла çĕрĕç оргăнĕсен тата колхозсен асра тытса, чăннипех болљшевикла пурнăçламала.

Акана тухас вăхăт çывхарса çитрĕ. Лаша выљăхсене пăхас тата вĕсене сыхлас тĕлĕшпе ответлă тапхăра кĕтĕмĕр, мĕншĕн тесен, кĕсресене чуптарасси те, тыхасене пăхса илесси те çак вăхăтра пулса пырать.

Пирĕн республикăри малта пыракан чылай колхозсенче коњухсем-стаханăвĕцсем хăйсен ĕçĕсене йуратса тата тăрăшса туса пыраççĕ, вĕсем лаша выљăхсене пăхас ĕçе лайăхлатса, лашасене çуракине хатĕрлес тĕлĕшпе пысăк çитĕнӳсем тунă. Сăмахран, Хитекушкăнĕнчи „Çĕнĕ çул" колхоз (Елĕк р.) 1938 çулта кашни гектартан 120 пăтран кайа мар тĕштырă туса илме Мăн Тукташри колхозпа социалисăмла ăмăртса ĕçлет. Лашасене пăхассине уйрăмах лайăхлатнă. Çураки вăхăтĕнче тăрантарма 250 пăт посыпкă çăнăхĕ, 4 капан утă уйăрса хунă. Начартарах лашасене уйрăм апат çине тăратнă.

Республикăн Çĕрĕç халăх комиссариачĕ çак кунсенче колхозсенче лашасене çуракине йепле хатĕрленнине тĕрĕслесе тухрĕ. Тĕрĕслӳ материалĕсем нумай районсенче, нумай колхозсенче лашасене çуракине хатĕрлес ĕç йапăх пулса пыни çинчен калаççĕ. Çĕмĕрле районĕнчи тĕрĕсленĕ колхозсенче вăтамран начартарах ӳтлисем—22,8 процент, пит начаррисем 5,6 процент, пăсăккисем 4,8 процент. Уйрăм колхозсенче: „Красноармеец" колхозра вăтамран начаррисемпе пит начаррисем 71,6 процент шутланаççĕ, „Молния" колхозра — 65,7 процент. Хĕрлĕ Чутай районĕнчи колхозсем тĕлĕшĕпе те çавнах каламала. Йединоличниксен лашисем тата начартарах. Çак асăннă районсемпе колхозсенче лашасем çинчен манса калаççĕ. Çĕмĕрлепе Хĕрлĕ Чутай районĕсенчи чылай колхозсенче начар лашасене уйрăм апат çине уйăрса тăратман, вĕсене йăвăр ĕçрен хăтарса каптармаççĕ, çавăнпа та хăшпĕр колхозсенче кĕсресем хăм пăрахнă тĕслĕхсем те пур. Çак кунсенче Çĕмĕрле районĕнчи „Коминтерн" колхозăн 5 кĕсре хăм пăрахнă. Паллах, çакнашкал колхозсенче халăх тăшманĕн вăрттăн алли ĕçлет. Политикăла сыхлăха татах та вăйлатмала, лаша выљăхсене ĕрчетес ĕçре тăшмансен сăтăрла ĕçĕн йулашкисене тĕпĕ-йĕрĕпех пĕтересси—кашни колхозăн тĕп задачийĕ пулса тăрать.

Çуракине тухас вăхăт нумай йулмарĕ. Çуракине ăнăçлăн ирттересси лашасем вăйлă пулнинчен тата кӳлмели таврашсене хатĕрлесе çитерничен нумай килет. Пур колхозсенче те лашасем çуракине хатĕррине халех тĕрĕслесе тухмала. Начартарах лашасене уйрăм апат çине тăратмала, чирлисене уйрăм витесене хупса сыватма тытăнмала. Çураки вăхăтĕнче лашасене тăрантарма кирлĕ чухлĕ утă-улăм, сĕлĕ тата ытти апатсене те уйăрса хумала. Çураки вăхăтĕнче лашасемпе ĕçлессине тата колхозниксене ĕçшĕн тӳлессине тĕрĕс организацилемеле. Лайăх коњухсене-стаханăвĕцсене хавхалантармала, вĕсемпе куллен ĕçлесе пымала, социалисăмла ăмăртăва анлăн сармала. Хăшпĕр колхозсенче халĕ те лашасене кӳлмели таврашсене уйрăм колхозниксем патĕнче усранисем пур. Вăхăта чăсмасăр вĕсене пухмала. Лашасене кӳлмели таврашсене йусама колхозсенче халех мастерскойсем тумала йе вăл ĕçе тума çынсем уйăрмала.

Çĕрĕç оргăнĕсемпе колхозсен лашасене çуракине хатĕрленипе, пĕр вăхăтрах тыхасене пăхса илессипе чуптару кампанине кăтартулă организацилемеле. Лашасене çуракине хатĕрлес ответлă тапхăрта ветеринари работникĕсем колхозсене кулленех пулăшса пымала.

Виçĕ республикă ăмăртăвĕнче мала тухассишĕн кашни колхозăн, кашни районăн çуракине самăр та вăйлă лашасемпе тухмала.

Партин йертсе пыракан работникĕсен занйатийĕсем

ПСК(б)П Мускав Комитечĕпе Мускав хула Комитетĕнче

1938 çулхи мартăн 20-мĕшпе 29-мĕш хушшинче ПСК(б)П Мускав облăçĕпе Мускав хула Комитечĕсенче Мускав организацинчи партин йертсе пыракан работникĕсен заљатийĕсем пулса иртнĕ.

Заљатисенче çаксем докладсем туса панă: ССР Сойузĕн Государствă План Комиççи председателĕ **Вознесенский** йулташ—„Иккĕмĕш пйатилеткă итогĕсемпе 1938 çулхи халăх хуçалăх планĕ çинчен", ССР Сойузĕн Çĕрĕç Халăх Комиссарĕ **Ейхе** йулташ—„Йалхуçалăхĕн черетлĕ задачисемпе 1938 çулхи йалхуçалăх планĕ çинчен", Мускав Совечĕн председателĕ **Сидăрăв** йулташ—„Мускав хулине реконструкцилемели генераљнăй планпа Мускав Совечĕн 1938 çулхи хуçалăх планĕ çинчен", ССР Сойузĕн Урăхçĕршыв ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ **Литвинăв** йулташ — „Пĕтĕм тĕнчери лару-тăру çинчен", Коминтерн Еçтăвкомĕн членĕ **Мануилљский** йулташ—„Тăванла компартисен ĕçĕпе Коминтернăн пĕрлĕх фрончĕшĕн кĕрешес çĕрти задачисем çинчен", ССР Сойузĕн Шалти ĕçсен Халăх Комиссарĕн заместителĕ **Заковский** йулташ—„Йутçĕршыв разведкисен троцкисла-бухаринла агĕнчĕсен шпионла, диверçилĕ тата сăтăрла метăчĕсем çинчен" докладсем туса панă.

Заљатисенче Мускав хулинчи ПСК(б)П райкомĕсен пĕрремĕш, иккĕмĕш тата виççĕмĕш çекретарĕсем, облăçри парти райкомĕсен пĕрремĕш çекретарĕсем, Мускав хулинчи тата облăçĕнчи пысăк предприйатисенчи, аслă шкулсемпе учреждениеенчи партком çекретарĕсем, çавăн пекех ПСК(б)П Мускав Комитечĕпе хула комитечĕн пай пуçлăхĕсемпе вĕсен заместителĕсем тата инструктăрĕсем пулнă. Кашни заљатинче 600 çын таран пулнă.

Докладсем заљатисенче пулнисене пысăккăн интереслентернĕ. Докладчиксене пит нумай ыйтусем панă. Панă ыйтусене тĕплĕн ответленĕ.

Çитес çывăх вăхăтра ПСК(б)П Мускав Комитечĕпе хула Комитечĕ Мускав организацинчи партин йертсе пыракан работникĕсемпе парти строителствипе Хĕрлĕ Çарти партилĕ-политикăлă ĕç ыйтăвĕсем тăрăх заљатисем туса ирттереççĕ.

Мартăн 27-мĕшĕнче ССР Сойузĕн Верховнăй Совечĕн президиумĕ папанинĕцсене тата вĕсене пăр çинчен илсе тухнă експедици участникĕсене орденсем панă.

Ӳ к е р ч ĕ ç и н ч е: Сулахайран сылтăмала малти ретре—„Мурман" пăрçĕмĕрен пăрахутăн капитанĕ И. Ф. Котцăв, „Таймыр" парçĕмĕрен пăрахутăн капитанĕ Б. Д. Барсукăв, И. Д. Папанин, „Мурманĕц" суднă капитанĕ И. Н. Улйанăв; иккĕмĕш ретре—П. П. Ширшов, „Таймыр" çинчи експедици начаљникĕ А. В. Остаљцĕв, Е. Т. Кренкĕл тата Й. К. Федăрăв—вĕсене орденсем панă хыççăн.

Ф. Кислов фото-ӳкерчĕкĕ (Сойузфото).

Кинофиљмсенче уйрăмăнах палăрнă артиссене наградăсем панă

ССР Сойузĕн Верховнăй Совет Президиумĕн Указĕпе кинофиљмсенче уйрăмăнах палăрнă артиссене наградăсем панă.

Ленин орденĕпе Б. П. Чиркова—„Юность Максима" тата „Возвращение Максима" кинокартинăсенче Максим роњне выљакан артиса наградăланă.

Ĕçлĕх Хĕрлĕ Йалав орденĕпе **В. Т. Кибардинăна**—„Юность Максима" тата „Возвращение Максима" кинокартинăсенче Наташă роњне выљакан артискăна наградăланă. Çавăн пекех Л. П. Орловă, С. Багашвили, В. В. Ванин, Г. Бушуйĕв, А. Ф. Жоржолиани, Л. Н. Свердлин, О. П. Жакăв артиссене те **Ĕçлĕх Хĕрлĕ Йалавĕ** орденĕ парса наградăланă.

„Знак почета" орденĕпе улта çынна наградăланă.

(ТАСС).

„Çурçĕр пољусĕ" станци оборудованийĕн выстăвки

Çурçĕр тинĕс çулĕн Тĕп Управленийĕ куçса çӳренĕ „Çурçĕр пољусĕ" станцин оборудованине Мускаври Политехнически музейе йатарласа уçăлакан выстăвкăра кăтартма панă. Папанинĕцсен палаткине, мĕн пур радио-оборудованине (унта Ернст Кренкĕл радиостанцийĕн журналĕ те пур), папанинĕцсем куçса çӳрекен пăр çинче усă курнă лебедкăна, çиларманне, байдаркăна, икĕ резинă кимĕне, тăхăр нарта, хăйулă папанинĕцсен тумтирĕсене, çывăрмали михĕсене, йулнă çимĕç хатĕрĕсене, йалари йапаласене—лампăсене, примуса, коструљсене, чайнике т. ыт. те. музейа илсе пынă.

„Çурçĕр пољус" станци оборудованийĕн выстăвки музейре çитес çывăх вăхăтрах уçăлать.

(ТАСС).

Горӳчине тĕрĕс сыхласа усрамала тата тĕрĕс расхутламала

ССР Сойузĕн Çĕрĕç Халăх Комиссарĕн Р. И. Ейхе йулташăн приказĕ

Иртнĕ çулта виçĕ кварталта кăна 5.000 машинă-трактăрлă станци хăйсене панă виçерен нефтепродуктăсене 50 пин тонна йахăн ытлашши расхутланă. Горӳчине сĕрмели çусене çакăн пек пысăккăн ытлашши расхутлани вăл—МТС директăрĕсенчен нумайĕшĕсем тирпейсĕр ĕçленĕ пирки тата нефтепродуктăсене сыхласа усрассипе вĕсене расхутлас çĕрте çĕрĕç оргăнĕсене йертсе пыракансем контроњ туман пирки, чылай çĕрте çĕрĕç оргăнĕсемпе МТС-нче халăх тăшманĕсем сăтăрла ĕçсем туса пынă пирки пулнă.

Нефтепродуктăсене сыхласа усрассипе вĕсене расхутлас ĕç çине государствăна хирĕçле пăхнине татăклăнах пĕтерес майпа ССР Сойузĕн Çĕрĕç Халăх Комиссарĕ Ейхе йулташ МТС-семпе совхоз директăрĕсене нефтепродуктăсене парассипе вĕсене расхутлас çĕрте çирĕп учот туса пыма хушнă. Нефт хуçалăхĕн мĕн пур участкисене ĕçре тĕрĕсленнĕ, тӳрĕ кăмăллă тата квалификацилĕ работниксене лартмала. Трактăриссен, заправщиксемпе горӳчине турттаракансен кустсемпе бригадăсенчи канашлăвĕсене туса иртермеле. Çав канашлусенче трактăриссем горӳчине мĕнле тата мĕнпе перекетлеме пултарни çинчен, заправщиксемпе горӳчине турттаракансем горӳчине тирпейсĕр тыткаласа расхутласа пĕтерессипе мĕнле майпа пĕтермели çинчен механиксем доклачĕсене итлемеле. Горӳчине перекетленĕшĕн тӳлемели çĕнĕ йĕрке çинчен трактăриссене сарлакан ăнлантарса памала. Горӳчине перекетленĕшĕн тата ытлашши расхутланăшăн, пĕрре усă курнă çăва пухнăшăн трактăриссене тӳлессине ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă постановлени тăрăх çирĕппĕн пурнăçа кĕртсе пымала.

Халăх Комиссарĕ трактăриссене, горӳчи турттаракансемпе заправщиксене пурне те горӳчине перекетлессишĕн, тата кашни тумлам горӳчине тирпейсĕр тыткаласа пĕтерессипе хирĕç хыттăн кĕрешсе пыма хушнă. МТС директăрĕсен горӳчине мĕнле расхутланине кашни уйрăм трактăр бригади тăрăх вунă кунта пĕрре тĕрĕслемеле тата горӳчине ытлашши расхутламала тăвакан сăлтавсене тупса палăртсан, вĕсене пĕтерме çийĕнчех кирлĕ мерăсем йышăнмала.

Республикăсенчи Çĕрĕç Халăх Комиссарĕсен, крайсемпе облăçсенчи çĕрĕç пайĕн начаљникĕсен нефтепродуктăсене расхутланине кашни МТС тăрăх вунă кунта пĕрре тĕрĕслемеле.

Нефтепродуктăсене тăшманла вăрласа пĕтерекенсене чи çирĕп ответ тыттармала тата суда памала. (ТАСС).

ХАМĂР ÇĔРШЫВРА.

◇ Шывçул транспăрчĕн Халăх Комиссарĕн приказĕ тăрăх Мускав хули тулашĕнчи пароходствăн икĕ екскурçилĕ пăрахутне çурçĕр пољусне хăйулăн çĕнтерсе илекенсен йатне—„Иван Папанин" тата „Е. Кренкел" йатне панă.

◆ Каменец-Подољск облăçĕнче çăмăр пулнă хыççăн урпапа сĕлĕ калчисем лайăх шăтса тухнă.

◆ Орлов облăçĕнче колхоз уй-хирĕсенче сурхи тырă акнă вăхăтра саслă кинопередвижкăсем 20 тата сасăсăр кинопередвижкăсем 190 ĕçлемеле.

◆ Ташкентра А. М. Горький памйатникне лартаççĕ. Кунсăр пуçне Ташкентри, Самаркандри, Ферганри, Бухарари тата Ново-Ургенчри чылай шкулсемпе урамсене писателĕ йатне параççĕ.

Чăваш АССР X-мĕш созыври Еçтăвакан Тĕп Комитетăн X-мĕш Çеççийĕ пайан, апрелĕн 3-мĕшĕнче, каçхине 6 сехетре саслă кино-театрта уçăлать

Кун йĕркинче:

1. Чăваш АССР халăх хуçалăхĕн 1938 çулти планĕ.

Докладчик—Л. С. Спасăв йулташ.

Содоклад—Чăваш АССР Государствă план комиççийĕ.

Докладчик—М. А. Андрейĕв йулташ.

2. Чăваш АССР 1938 çулхи бӳджечĕ.

Докладчик—И. З. Захарăв йулташ.

Содоклад—Чăваш АССР Еçтăвакан Тĕп Комитечĕн бӳджет комиççийĕ.

Докладчик—П. Д. Краснов йулташ.

3. Чăваш АССР Еçтăвакан Тĕп Комитет Президиумĕ йышăннă постановленисене çирĕплетесси.

Докладчик—Т. В. Васийĕв йулташ.

***

Чăваш АССР Еçтăвакан Тĕп Комитечĕн парти группин ларăвĕ çавăнтах каçхине 5 сехетре пулать.

Совет пограничникĕсем чикĕ хуралĕнче

ФРУНЗЕ, апрелĕн 1-мĕш. (ТАСС) Командир Кретăв йулташ йертсе пыракан чаçри пограничниксем Таљ-Шаљ тăвĕсем çинче службăра тăраççĕ. Йур çунă чухне те, çулталăкăн кирек хăш тапхăрĕнче те çекретсенче тăрса, вĕсем тăван çĕршыв чиккисене çирĕп çăрапа питĕрсе илнĕ пек вăйлăн сыхлаççĕ.

Çак кунсенче чикĕри отрйад, начаљникпе Сырицă йулташпа пĕрле, „Терек" йатлă перевалта, тинĕс виçинчен 4.000 метр çӳлтете тăнă чухне, çилтăвăл пуçланса кайнă. Сăрт çинчи сукмаксене йур йăлтах шăлса лартнă. Бойецсем икĕ талăк хушши çутçанталăк аллинче тыткăнра пурăннă. Çилтăман айне пулнă нарйада пулăшма пограничниксем виçĕ ушкăнпа тухнă. Вĕсенчен пĕр ушкăнĕ—кĕçĕн командир Кравцăв йулташ йертсе пыракан ушкăн—пысăк йăварлăхсем тӳссе, йулташĕсене çăлнă.

Троцкисла-бухаринла бандитсене суд тунă вăхăтра бойецсем совет чиккисене татах та çивĕчрех сыхлама сăмах панă. Хăйсен обйазателствине пограничниксем чыслăн пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Çак кунсенче вĕсем чикĕ урлă пирĕн çĕршыва каçса кĕнĕ темиçе диверсантпа шпиона тытнă.

Тыткăна лекнĕ Германи љотчикĕсем кăтартса пани

Мартăн 15-мĕшĕнче Винарос çывăхĕнче (Испанин кăнтăрти порчĕ) республиканĕцсем фашиссен „Гейнкĕл" маркăлă гидросамољотне персе ӳкернĕ. Унăн екипажĕнчи 4 çынне тыткăна илнĕ. Екипажра Германи авиацинчи çар служăщчийĕсем пулнă.

Тыткăна илнисене допрос тунă чухне: сăнавçă Рӳккер, пилот Тонолло, радис Штрошейер тата механик Шмитц çапла пĕлтернĕ: Пољйенсра (Майоркă утравĕ) Германин сывлăш бази пур. Пољйенсри Германи ескадрилйине майор Галлингаузен йертсе пырать.

ЙУТ ÇĔРШЫВСЕНЧЕ

Китайри вăрçă

Китай çарĕсем Шаљдун провинцинче (Çурçĕр Китай) Йапони чаçĕсене халĕ те хĕссе пыраççĕ.

Йапони командованийĕ китайĕцсем Китайăн Çурçĕр фрончĕсене вăрçă хатĕрĕсем турттарса пырассине пӳлсе лартма хăтланать. Йапони самољочĕсем Кăнтăр Китайри чукунçулсем çине, пуринчен ытла Кантон—Ханькоу чукунçулĕ çине кашни кунах бомбăсем пăрахаççĕ. Китайĕцсем çав çулсем тăрăх йутçĕршывсенчен сутăн илнĕ вăрçă хатĕрĕсене турттарса илсе пыраççĕ. Йапони самољочĕсем тапăнаççĕ пулин те, чукунçул тăрăх пуйăссем çӳреççĕ.

Вăтам Китайра пысăк çапăçусем Тайху йатлă кӳлĕрен хĕвеланăçнеле пулса пыраççĕ. Кунта Китай çарĕсем Гуанде тата Сыаљ йатлă хуласене туртса илнĕ. Йапони çарĕсем, Китай çарĕсем хĕссе пынă пирки, Хучжоуран тата Уканрен Ханчжоу йеннеле кайала чакма пуçланă. Мартăн 30 мĕшĕнче Китай партизанĕсен пĕр отрйачĕ Цзйаљтан йатлă йуханшывăн çурçĕр çыранĕ йенне каçнă. Çапăçнă хыççăн партизансен отрйачĕ йапонĕцсенчен Хаййаљ хулине (Ханчжоуран çурçĕрпе хĕвелтухăçнеле) туртса илнĕ.

Çак кунсенчех партизансен отрйачĕ Дињуаљрен (Таљцзињ—Пукоу чукунçулĕн кăнтăр участки) хĕвелтухăçнеле Йапонин 200 çынлă чаçне йăлтах çĕмĕрсе тăкнă.

(ТАСС).

Тухса тарнисене пулăшу пама

Çак кунсенче Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсен йут çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Хелл Йевропăри тăхăр государствă правителствине тата Америкăри 20 çĕршыв правителствисене, Австрипе Германирен тухса тарнисене пулăшу памашкăн пĕтĕм тĕнчери комитет тума сĕнсе чĕнсе каланă.

Бељги, Бразили, Сан-Доминго, Ел-Саљвадор, Франци, Гаити, Мексикă, Перу тата Уругвай правителствисем вăл комитета кĕме килĕшӳ панă. Итали вăл сĕнӳве йышăнман.

Америкăри „Вашингтон стар" хаçат: фашисăмран хĕн-хур тӳснисене пулăшу парас тĕлĕшпе Хелл мĕн пур демократилĕ çĕршывсене те пĕрлештерме пикенет,—тесе çырать. Фашисла агрессăрсемпе кĕрешнĕ çĕрте демократилĕ çĕршывсем хăйсен мĕн пур майĕсемпе усă курмала, тесе ыйтать хаçат.

Германи çарĕнчен салтаксем тараççĕ

Парижре тухса тăракан фашисăма хирĕçле бӳллетен „Дейче информационен" Германи çарĕнчен салтаксем массăлăн тарни çинчен пĕлтерет.

Таркăн салтаксемпе кĕрешме тесе Берлинра полицин тĕп управленинче йатарласа пай организациленĕ. Анчах таркăнсене тытма пит йăвăр мĕн, мĕншĕн тесен халăхсем, çавăн пекех фашисла парти членĕсем те уççăнах таркăнсем майлă тăраççĕ.

Мирлĕ вăхăтра çартан массăлăн тарни вăл Германи çарĕнче салтаксенчен тӳсме çук мăшкăланинчен тата çарта хĕнениренчен килет. Çартан халљхи пек массăлăн тарни Кайзер Германинче те пулман.

(ТАСС).

Республикăлă Испани фашисăма отпор пама пĕтĕм вăйа мобилизацилет

Республикăлă Испанире çара хăйсен ирĕкĕпе кайакансенчен çĕнĕ çар соединенийĕсем тăваççĕ. Хăйсен ирĕкĕпе çара кайакансене пухасси пысăк хаваслăхпа пулса пырать. Мадридра, Барçелонăра, Хайенре тата ытти хуласенче те хăйсен ирĕкĕпе çара кайакансене çыракан путнктсем иртен пуçласа тĕттĕм пулаччене ĕçлеççĕ. Хăйсен ирĕкĕпе çара кайма çырăнакансене çийĕнчех çар ĕçне вĕрентме тытăнаççĕ.

Каталонири çамрăксен социалисла пĕрлешĕвĕн сойузĕ хăй пĕр дивизи туса формăлать. Мадридрисем те фронта пĕр дивизи йама пулнă.

Каталонири хĕрсен нацилĕ сойузĕ республикă правителствине çапла каласа пĕлтернĕ: Испани хĕрĕсем ырми-канми ĕçлеме пулаççĕ, вĕсем тылра фашисăма хирĕç çапăçакан республикă çарĕсене материаллă пулăшу парассине организацилеççĕ,—тенĕ.

Коммунисла хаçат „Френте Рохо" халăх фрончĕ пĕрлештерсе тăракан партисемпе организацисене пурне те Испани республикĕн халăх çарне ваљљи çĕр пин доброволĕц тупса пама чĕнсе каланă.

Республикăлă Испани правителстви фронтран нумай телеграммăсем илет. Вĕсенче: халăх çарĕн бойецĕсем тăшмана тĕпĕ-йĕрĕпе пĕтерсе тăкмасăр хăйсен пăшалĕсене хумĕç,—тесе çыраççĕ.

(ТАСС).

1938 çулхи çураки умĕн

Икĕ колхоз ăмăртăвĕ

„Красный партизан" колхоза комсомолĕц А. И. Пефремăв йертсе пырать. Колхоз председателĕ пуличчен вăл 4 çул хушши бригадирта ĕçленĕ, халь 2-мĕш çул ĕнтĕ колхоз председателĕнче ĕçлет. Колхоз иртнĕ çулта вăтам шутпа кашни гектартан 16,15 центнĕр тĕштырă илнĕ. Колхозниксен иртнĕ çулхи тупăшĕ пысăк пулнă. Вĕсем кăçал татах та вăйлă тырпул туса илме хатĕрленеççĕ. Вăтам шутпа гектартан 20 центнĕр тĕштырă туса илессишĕн „Чувашия" колхозпа ăмăртăва тухнă. Пĕнрес районĕнче 20 центнĕр тырă-шăн ăмăртса ĕçленине çак колхозсем пуçарса янă.

А. Пефремăв тата „Чувашия" колхоз председателĕ Сидăрăв йулташ йалхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри сĕьотĕнче пулнă. Сĕьотра вĕсем йалхуçалăхĕнче татах та лайăхрах кĕрешсе ĕçлеме вĕренсе килнĕ. Республикăра рекордлă тырпул туса илнĕ Вăрнар районĕнчи Сталин йачĕпе тăракан, Йелчĕк районĕнчи „Ишчерйакăвă" тата ытти колхозсен пахă ĕç опычĕсемпе тĕплĕн паллашнă. Республикă кăçал 100 пăт тĕштырăшăн кĕрешĕвне тухни çинчен колхозниксене тĕплĕн калаçа панă. Вĕсене вăйлă тырпул туса илес, йышлă выльăх-чĕрлĕхшĕн кĕрешес ĕçре хавхалантарнă.

Ăмăртакан икĕ колхоз хушшинче чăнчăн ăмăрту пырать. Ăмăрту догăвăрĕ пурнăçа мĕнле кĕрсе пынине тĕрĕслесех тăраççĕ. „Енĕр çуракине мĕнле хатĕрленесси пынине „Чувашия" колхозран тĕрĕслеме килсен, пирĕн вăрлăхсем таса марринчe палăртрĕç. Иккĕмĕш хут тĕрĕслеме киличчен пĕтĕм вăрлăха тепĕр хут тĕплĕн суртласа хутăмăр",—тет „Красный партизан" колхоз председателĕ Пефремăв йулташ.

Колхоз кăçал 177 гектар çине акать. Вăрлăхсем таса. 35 центнĕр тулă вăрлăхне алăпа пĕрчĕн-пĕрчĕн суйласа таситнă. Техникăлă культурăсем—махоркă, кĕтĕн, кантăр акса тăваççĕ. Иртнĕ çулта çак культурăсем те, уйрăмăнах махоркă ăнăçлă пулнă. Государствăна махоркă памалли плана 115 процент тултарнă. Çак культурă йенĕпе тупăш илсе, 4 пин тенкĕ укçапа ĕçкунĕсем тăрăх валеççе панă. Кăçал 12 гектар çине махоркă акаççĕ.

Пĕтĕм ĕç план тăрăх пулса пырать. Çуракине хатĕрленнĕ май кашни бригадăрах çураки планĕсене туса хунă. Колхозниксем хăйсем çуракинче мĕн ĕçре ĕçлемелине лайăх пĕлсе тăраççĕ.

Кăçал план тăрăх фосфорит çăнăхĕ 40 центнĕр кÿрсе килмеле пулнă, 150 центнĕр кÿрсе килнĕ. Аммони сульфатне 18 центнĕр кÿрсе килнĕ. 3825 лав торф, 2985 лав тислĕк уйа кăларнă.

Палхуçалăх машинисене тахçанах йусаса хатĕрленĕ. „Чувашия" колхозран ку колхоза тĕрĕслеме килсен, 3 лаша начартараххине палăртнă. Çак лашасене халĕ вăйлă апат çине тăратнă. Лашасене çураки вăхăтĕнче çитерме 200 центнĕр сĕлĕ, 700 центнĕр викă утн уйăрса хунă.

Колхоз производствинче стаханăвла ĕçлекенсем ÿссе пыраççĕ. Нумайах пулмасть колхозра лайăх ĕçлесе пыракан 3 çамрăка комсомол ретне илнĕ. 1937 çулта 150 пăт тĕштырă, 130 тенкĕ ĕçлесе илнĕ А. Комиссарăва бригадира суйланă. Вăл йертсе пыракан бригадă халь малта пырать.

Çапла ĕçлеççĕ районри малта пыракан колхозра. „Красный партизан" колхозпа ăмăртакан „Чувашия" колхоз та кайа йулмасть. Ку колхозра хĕллехи агротехникăла ĕçсене кăтартулăн туса пынă. Ăмăрту догăвăрĕнче обйазательствă илнĕ тăрăх, 40 центнĕр фосфорит çăнăхĕ кÿрсе килнĕ, 4258 лав торф, 1500 лав тислĕк уйа кăларнă. Колхоз правленийĕ бригадăсенче çуракине мĕнле хатĕрленнине тĕрĕслесех тăрать. Кăçал çĕнĕ агротехникăла ĕçсене иртнĕ çулхинчен анлăрах иртерме палăртнă. Çакна шута илсе, колхозниксем агротехникăла ĕçсене вĕренсех пыраççĕ. Бригадирсем, колхоз правлени членĕсем килте харпăр-хăй тĕллĕн вĕренмели массăлă агротехникăла курсра вĕренеççĕ.

Икĕ колхозĕнче те кăçал вăйлă тырпул туса илес ĕçе хĕрÿлĕн тытăннă. Колхоз руководстви лайăх йертсе пыни тата колхозниксен ĕçри хавасланĕ обйазательствăсене пĕтĕмĕшпех пурнăçласа пыма май парать.

Т. Майорăв.

Гектартан 20 центнĕр илессишĕн

ПĔНРЕÇ. Çĕнĕ Чурашри „Ударник" колхоз иртнĕ çулсенче пур ĕç тăрăх та кайа йулса пынă. Колхоз председателĕ тата бригадирсем пĕр майах улшăнса тăнă. Çакна пула иртнĕ çулсенче ку колхозра çирĕп йĕрке пулман.

Пур колхозсенче те йалхуçалăх ĕçĕнче пысăк çĕнтерÿ тăвассишĕн кĕрешеççĕ. Вăйлă тырпулшăн тата йышлă выльăх-чĕрлĕхшĕн пыракан кĕрешÿре кайра пынă колхозсем те малалла тухса пыраççĕ. „Ударник" колхоз кăçал гектартан 20 центнĕр тĕштырă туса илме пулса, Енеçри Калинин йачĕпе тăракан колхозпа ăмăртува тухнă. Ăмăрту догăвăрĕ мĕнле пурнăçланса пынине тĕрĕслесех тăраççĕ. Çĕнĕ Чурашсем Калинин йачĕпе тăракан колхозра мĕнле ĕçленине виçĕ хутчен тĕрĕсленĕ. Вĕсен ĕçĕпе паллашса, çитменлĕхсене тÿрлетме, хушса хăварнă. Тĕрĕсленĕ чухне палăртнă çитменлĕхсене çийĕнчех пĕтерсе пыраççĕ.

„Ударник" колхоз хĕллехи агротехникăла ĕçсене лайăх пурнăçласа пынă. Уйрăмăнах йалхуçалăхĕнче малта пыракансен сьочĕ чĕнсе каланине сÿтсе-йавчă хыççăн, вăйлă тырпулшăн кĕрешесси хĕрÿлĕн пыма тытăннă. Çуракине хатĕрленес ĕçре стаханăвецсем ÿссе пыраççĕ. Колхозницăсем уйрăмăнах лайăх тĕслĕхсем кăтартса параççĕ. 1938 çулта 30-40-шер ĕçкунĕ тунă колхозницăсем те чылай.

120 центнĕр тулă, 26 центнĕр йасмăк, 45 центнĕр пăрçа вăрлăхĕсене улăштарса хатĕрленĕ. Колхоз пĕтĕм çĕре суртлă вăрлăхсемпе акать. Пахалăх инспекторĕ М. Степанăв вăрлăхсем мĕнле сыхланса тăнине асăрхасах тăрать.

— Вăйлă тырпулшăн кĕрешес ĕçе суртлă вăрлăхсем хатĕрлес ĕçрен тытăнтăмăр,—теççĕ колхозниксем. Чăнах та ку тĕлĕшпе пысăк ĕçсем тунă. Кăçал 5 гектар вăрлăх участки çине суртлă сĕлĕ акаççĕ, ытти культурăсем йенĕпе те суртлă вăрлăх участкисем тума палăртнă.

Малтисенчен пример илмеле

Сĕт-çу тресчĕн республикăри кантурĕ государствăна сĕт-çу парас обйазательствăна вăхăтчен тултарнăшăн тата государствă кăтартса панă хакпа сĕт-çу сутнă колхозсене, сĕт-çу фермисен руководителĕсене нумай премиленĕ.

Акă, Йетĕрне районĕнчи Калинин йачĕпе тăракан колхоз иртнĕ çулхи сĕт-çу парас обйазательствăна 1937 çулхи апрелĕн 1-мĕшне тултарнă тата кашни ĕне пуçне 400-шер литр сĕт государствăна сутнă. Кăçалхи обйазательствăна та мартăн 1-мĕш тĕлне пĕтĕмĕшпех тултарса, кашни ĕне пуçне 400-шер литр сĕт сутма догăвăр тунă.

Çавăнпа сĕт-çу фермин пуçлăхне И. С. Дербеньов йулташа 100 тенкĕ, Е. И. Дербеньовă ĕне савакана 50 тенкĕ укçа парса премиленĕ.

Çавнашкалах Кăташри „Пионер" колхоз иртнĕ çулта государствăна 18 пин литр сĕт сутнă, кăçал та сĕт-çу парса татнă хыççăн кашни ĕнерен 400-шер литр сĕт сутма догăвăр тунă. Çавăнпа колхоза 500 килограм турантă, фермă пуçлăхне Мольков йулташа 50 тенкĕ укçа панă.

Йетĕрне хулинчи А. П. Пискунова колхозница кашни çулленех хăйĕн ĕнинчен сунă сĕте 600—1000 литр таран государствăна сутать. Кăçал та вăл икĕ пин литр сĕт сутма догăвăр тунă. Ăна 100 килограм турантă, 75 тенкĕ укçа парса премиленĕ.

Çавăн пекех Стрелецкинчи Сторожăвă колхозница та иртнĕ çулта государствăна 600 литр сĕт сутнă. Кăçал хăйĕн обйазательствине тултарса тата 300 литр сутнă та ĕнтĕ.

Государствăна сĕт сутса Пискунова колхозница 900 тенкĕ укçа, 850 килограм турантă илнĕ. Калинин йачĕпе тăракан колхоз 6 пин те 500 тенкĕ укçа, 6 пин килограм турантă илнĕ.

Иваньк̆авăри (Улатăр р.) çепаратăр пункчĕн пуçлăхĕ Йушковский йулташ сĕт-çу сутăн илес плана 160 процент тултарнă. Йелчĕк районĕнчи çу сазачĕн маçтăрĕ Палимăв йулташ иртнĕ çулта сĕт-çу сутăн илес плана 490 процент тултарнă. Вăл кăçал та 60 пин литр сĕт сутăн илме догăвăр тунă. Ăна 50 тенкĕ укçа тата Ваçильсурскинчи канмали çурта кайма путовка парса премиленĕ.

Колхозсем пурте хăйсен умĕнчи обйазательствăсене тултарнă хыççăн государствăна сĕт сутма пултараççĕ. Колхозниксене сĕт-çу илекен пунктсен пуçлăхĕсемпе çу савăчĕсенче ĕçлекенсем тĕплĕн ăнлантарса пани кирлĕ. Лайăх ĕçлекен колхозсемпе уйрăм колхозниксен примерĕсене кайа йулса пыракансем патне çитерес пулать.

Государствăна сĕт-çу обйазательнă йĕркепе парассине тата государствă хакĕпе сутăн илессине анлăн сарса, плансене вăхăтра тултарассишĕн тăрăшар.

Т. Комаров.

Оперативлă йертсе пымала

ВĂРНАР. Район государствăна аш-какай парас плана тултарас тĕлĕшпе чăтма çук начар ĕçлесе пырать. Пĕрремĕш квартăлта пĕтĕмпе çулталăк планне 35 процент тултармала пулнă пулсан, пайанхи куна 18 процент ытларах çеç пурнăçланă. Колхозсенчи фермăсем плана 50 проц. йахăн тултарнă. Çав вăхăтрах колхозниксемпе йединоличниксем кайра пыраççĕ. Вĕсем пĕтĕмпе те çулталăк планне 9 процента йахăн çеç пурнăçланă.

Начар ĕçлесе пыракан колхозсенчен чи малтанах Айкăш йалсоветне кĕрекен „Чăваш Коммунĕ" тата „Ирар" колхозсем çинчен каламала. Икĕ колхозĕ те кăçалхи çулшăн пĕр килограм та аш-какай паман. Йалсоветне кĕрекен йединоличниксем государствăна 1937 çулшăн та аш-какай парса татман. Шĕнер, Уйкас, Нурăс, Кăкшăм йалсовечĕсем те пит начар ĕçлесе пыраççĕ.

Çавăн пекех государствăна аш-какай парас плана тултарас çĕрте хатĕрлев кантурĕн работникĕсем те йалсовечĕсемпе колхозсене çителĕклĕ таран йертсе пымаççĕ. Инспекторсем йалсене тухсан, колхозниксемпе йединоличниксене аш-какайа вăхăтра парса татасси çинчен тĕплĕн ăнлантарса пани çук.

Н. К.

Строительствă материалĕсене хатĕрлесси вăраххăн пырать

Кăçал Вăрнар районĕн икĕ километр тăршшĕ çул çине чул, виçĕ километр тăршшĕ шашкă сармала, çĕнĕрен 7 кĕпер тумала, иртнĕ çулсенче тунă çулсене йусаса тăмала. Çулйĕр планне тултарас пулсан 3390 кубла метр йавăç хатĕрлесе турттармала, çавăн пекех 30414 кубла метр хăйăр, 3800 кубла метр чул хатĕрлемеле. Анчах пайанхи куна строительствă валльи материалсем хатĕрлесси çителĕксĕр пырать. Мартăн 25-мĕшне çулйĕр строительствинче кирлĕ материалсене 100 процентпех хатĕрлесе çитермеле пулнă пулсан, район вăрман касса хатĕрлес плана 50,8 процент, турттарас плана 43 процент, хăйăр хатĕрлессипе 18 процент, чул кăларса турттарас плана 3,15 процент çеç тултарнă.

Çулйĕр строительстви валльи материалсем хатĕрлес ĕçре уйрăмăнах Уйнер (йалсовет председателĕ Иванов), Хапăс (Комаров), Мамалай (Бурмистрăв), Çавалкас Мăрат (Зайцев), Çăкăт (Уткин) йалсоветсем чăтма çук начар ĕçлесе пыраççĕ, ку йалсовечĕсенче çулйĕр секцийĕсем ĕçлемеççĕ, вĕсене йертсе пыракансем те çук.

Районра çулйĕр ĕçĕнче лайăх ĕçлекен колхозсем те çук мар. Акă Çĕнйахакасси (председателĕ Захарăв), Алкаçăн (Сантимĕрăв) колхозĕсем мартан 7-мĕшĕнче çулйĕр строительстви валльи йавăç касса турттарас плана тултарчĕç.

Н. Козлов.

ССРС Верховнăй Совечĕн депутачĕ, Инçет-Хĕвелтухăçĕнчи Хĕрлĕ йалавлă уйрăм çар политуправленин инструкторĕ В. Хĕтагурăва хăйĕн суйлавçисенчен вуншар çырусем илет.

Ÿкерчĕк çинче: В. Хетагурăва çырусем вулать.

Великжанин фото-ÿкерчĕкĕнчен (Союзфото).

СУЙЛАВ ПОЛОЖЕНИСЕНЕ ВĔРЕНЕÇÇĔ

Чăваш Пединститутĕнче РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйламалли Положенисене вĕренес ĕç хĕрÿлĕн пырать. Агитаципе пропаганда ĕçне тума 50 студента уйăрнă. Студентсем хăйсем вĕренисер пуçне, Шупашкар сывăхĕнчи йалсенĕ тухса суйлав саккунĕ çинчен ăнлантараççĕ. Кнутиха, Лакреганка, Йакимăвă йалĕсенче суйлав саккунне вĕренмели кружоксем организациленĕ. Шупашкар хулинче рабочи посолкăпа Кузнечнайа урамри кил хуçисемпе кил хуçи хĕрарăмĕсене вĕрентес ĕçе тытăнчĕç.

Сорокин.

Ишек йалсоветне кĕрекен йалсенче (Ишлей р.) суйлав Положенине вĕренме 28 кружок организациленĕ. Ваçилйев агитатăр йертсе пыракан кружок аван ĕçлет.

Арк. Паумăв.

Укçа-тенкĕ перекете хурасси ÿсет

Предприйатисенче стаханăвла йухăм саралса пыни, производствă тата халăх хуçалăхĕн планĕсене тултарассишĕн кĕрешни, ĕçукçи ÿсни, промышленнăç таварĕсен тата йалхуçалăх çимĕçсен хакĕ йунелни, ĕçсерлĕх сукки, ĕçсынинсен культурлăхĕ ÿссе пыни—çаксем вĕсем пурте ĕçсыннисене укçа-тенкĕ перекетлеме май параççĕ. Перекете хывасси çулран çул ÿссе пырать.

Йулашки ик-виç çул хушшинче Шупашкар хулинчи перекет кассине укçа-тенкĕ хурасси çапла ÿссе пынă:

1935 çулта перекет кассине 277 пин тенкĕ ытларах хунă пулнă. 1937 çулта 724 пин тенкĕ хывнă, икĕ хут çурă ытла ÿснĕ. 1938 çулта татах та ытларах ÿсмеле. Кăçал мартăн 25-мĕш тĕлне перекет кассинче перекетлеме хывнă укçа 443 пин тенкĕ шутланнă. Çавăн пекех вкладчиксен шучĕ те хăвăрт ÿсет. 7200 вкладчикăн 2700 пин тенкĕ перекетре тăрать. Кашни вкладчикăн перекетре вăтамран 375 тенкĕ.

Перекет кассинче ĕçлекенсен, вырăнти комсодсен, финанс секци членĕсен, пĕтĕм хулари финанс активĕн ĕçсынисем хушшинче укçа-тенкĕне перекете хывни мĕнле усă пани çинчен тĕплĕн ăнлантарса парас пулать.

Кашни ĕçсынни халĕ стаханăвла ĕçлесе, тÿрĕ ĕçлесе тунă ĕçукçинчен хăйне валли перекетлесе хăварма пултарать. Хăйĕн укçи-тенкине перекетлекен кашни çынăн активлă вкладчик пулма, харпăрхăйĕн укçи-тенкине тыткаласшине перекет кассин урлă йĕркелеме тăрăшас пулать.

Вкладчиксене кăмăллă, культурăлă йышăнасси—хулари перекет кассинче ĕçлекенсен ответлă ĕçĕ. Вкладчиксемпе тивĕçлĕн ĕçлесен 1938 çулта перекет касси татах та пысăкрах çитĕнÿсем тăвĕ.

И. З.

Зайом укçине апрел уйăхĕнче пухса çитермеле

Предприйатисенче, учреждениссенче, организацисенче, ертелсенче рабочисен, служăщисен „ССР Союзĕн оборонине тĕреклетмели зайом" укçине апрел уйăхĕнче пĕтĕмпех пухса çитермеле. Çапла пулин те, комсодсем, перекет кассисем тата бухгалтĕрсем зайом укçине питех те йапăх пухаççĕ. Зайомшăн тытса йулнă укçапа бухгалтĕрсем перекет кассине вăхăтра куçармаççĕ. Вырăнти комсодсем йапăх ĕçленине пула, хăшпĕр организацисенче зайом укçине малтан çыранниничен сахалтарах пухаççĕ. Зайом сарнă хыççăн ĕçе илнĕ рабочисемпе служăщисем хушшинче зайом сарасси çине профсойуз организацийĕсем çаврăнса пăхман. Пуринчен ытла вăл çак организацисенче палăрать: пĕрремĕш номĕрлĕ типографинче бухгалтĕр Пешехонăв рабочисемпе служăщисенчен зайомшăн пухнă укçана нойабĕр уйăхчене пĕр пус та куçарман пулнă. Çакăншăн ăна 8 уйăхлăх тĕрмене лартмала сут тунă. Халĕ ку типографинче зайомшăн тытса йулнă укçана кăллех 2104 тенкĕ таран перекет кассине куçарман. Госфиларминче—2424 тенкĕ, кооптехникумра—642 тенкĕ, Чăвашторгра—284 тенкĕ, Макарон хапрăкĕнче—305 тенкĕ, Армантрестра—376 тенкĕ т. ыт. те.

Урам комитечĕсенчи зайом уполномоченнăйсем чылайĕшĕ аван ĕçлеççĕ. Уполномоченнăйсенчен чылайĕшĕ зайом укçине пухса пĕтерне, зайом çырăнса илнĕ килхуçи хĕрарăмсене, пенçи илсе пурăнакансене облигацине тахçанах алла панă. Ку тĕлĕшпе кайа йулакан уполномоченнăйсене „ССР Союзĕн оборонине тĕреклетмели зайом" укçине апрел уйăхĕнче пухса пĕтерме пулăшас пулать.

Вырăнти комсодсен, бухгалтĕрсен, перекет кассин зайом тытакансем хушшинче çак ĕç çинчен халех ăнлантарса пама тытăнмала. Апрел уйăхĕнче зайом çырăнса илнисен кашнинех зайом укçине парса татмала. Зайом укçине малтан çыранса илнинчен сахалтарах тÿлени пулмала мар.

Çавăнпа та финанс работникĕсен, финанс активĕн, комсодăн перекет кассисен зайом укçине пухас ĕçе татса паракан уйăхра—апрел уйăхĕнче çине тăрсах ĕçлемеле.

И. Золотников.

Агитатăрсене пулăшу

РСФСР

Российă Советлă Федеративлă Социалисăмлă Республикă Советлă Социалисăмлă Республикăсен Союзне пĕрлешнĕ 11 республиксен хисепĕнче пысăк вырăнта тăрать.

РСФСР — территори тĕлĕшĕнчен те, халăх хисепĕ тĕлĕшĕнчен те чи пысăк тата нумай нацилĕ республикă.

ССР Союзĕ йышăнса тăракан 21.175,2 пин тваткăл километртан РСФСР çине 16.510,5 пин тваткăл километр тивет, ку вăл ССР Союзĕн пĕтĕм территорин 4/5 пайĕ пулать. ССР Союзĕнче 169 мĕлйун çын пурăнать пулсан, çак шутран РСФСР-че 105 мĕлйун ытла çын, урăхла каласан, Совет Союзĕнчи пĕтĕм халăх шутĕнчен 2/3 пайĕ пурăнать.

РСФСР-не ССР Союзĕн кăнтăр хĕвеланăç пайĕсĕр (УССР тата БССР) пуçне Йевропăн пайĕ, Кавказăн çурçĕр пайĕ, Хĕвеланăç тата Хĕвелтухăç Çĕпĕр, Инçет-Хĕвелтухăç кĕрет. РСФСР территорийĕ çурçĕрти пăрлă океанран пуçланса, кăнтăр-хĕвелтухăçĕнчи хура тинĕсе çитиччен, хĕвеланăçĕнчи Латви чиккисенчен пуçланса, хĕвелтухăçĕнчи Лăпкă океана çитиччен тăсăлса выртать.

РСФСР—çĕр тата çĕр айĕнчи пуйанлăхсем тĕлĕшĕнчен пуйан. Çурçĕрте вăрман тулли. Çурçĕртен кăнтăрала, хĕвеланăçĕнчен хĕвелтухăçнеле пур йенĕпе те вĕçĕхĕррисĕр уй-хир, сарлака çарансем, кĕтÿ çÿретмели вырăнсем сарăлса выртаççĕ. Тинĕссенче, йуханшывсенче пулă темĕн чухлĕ. Çĕр айĕнче тимĕр тăпри, кăмрăк, нефть, ылтăн, минераллă удобренисем тата ытти усăллă йапаласем темĕн чухлĕ.

Совет Союзĕнчи пĕтĕм тимĕр тăпринчен 80 проц. РСФСР-че, кăмрăк запасĕнчен 90 проц., пĕтĕм нефть пуйанлăхĕнчен виççĕмĕш пайĕ, торф 85 проц., гидроенерги 75,5 проц., вăрман пуйанлăхĕнчен 96 процентĕ РСФСР-че тăрать.

РСФСР—индустрилĕ пысăк та хăватлă государствă. РСФСР промышленнăçĕ ССР Союзĕн пĕтĕм промышленнăç продукци хисепĕнче икĕ пайĕнчен виçĕ пайне ытла йышăнса тăрать. РСФСР-че шултра промышленнăç центрĕсем, индустрилĕ гигантсем, автомобил, трактăр, авиаци промышленнăçĕсен пысăк савăчĕсем вырнаçнă.

Республикă промышленнăçĕн виçи Хĕвеланăç Йевропăри малта пыракан капиталисăмла çĕршывсен тата Америкă промышленнăçĕн виçине çитнĕ, промышленнăçăн уйрăм отраслĕсем тăрăх вĕсенчен те иртсе кайнă.

РСФСР шултра промышленнăç продукцийĕ 1937 çулта патша Российĕнчи промышленнăç продукци хисепĕнчен 8 хут ытла иртсе кайнă.

Производствă хатĕрĕсем тăвакан промышленнăç продукцийĕ патша Российĕн промышленнăçĕпе танлаштарсан 12 хут ытла пысăк.

Урал хăй пĕчченех патша Российĕ шăратса кăларнинчен 2/3 хут ытларах чукун шăратать.

Мускав облăçĕнчи Кашира електростанци кăна ĕлĕк патша Российĕн территоринче ĕçлесе кăларнă пĕтĕм електроенергирен ытларах енерги парать.

Сталинла пйатилеткăсен çулĕсем хушшинче РСФСР-че çĕнĕрен промышленнăçла центрсем тунă, çĕнĕрен пысăк хапрăксемпе савăтсем туса ĕçе йанă. РСФСР территоринче ССР Союзĕн иккĕмĕш кăмрăк-металлурги базине—Уралпа Кузнецк комбинатне тунă. Çак Урал-Кузнецк комбинатне кĕрекен пĕр Магнитогорскри савăт çеç, иккĕмĕш черетпе тумалине туса пĕтернĕ хыççăн, патша Российĕн пĕтĕм савăчĕсем панинчен ытларах металл парать.

Сталинградри, Челябинскри Сталин йачĕпе тăракан савăтсем пек, Саратăври комбайн тăвакан савăт пек, Ростăври йалхуçалăх машинĕсем тăвакан, Мускаври, Горькири, Йарославльри автомобил савăчĕсем пек пысăк савăтсене, хапрăксене вуншарăн туса хута йанă.

ССР Союзĕнчи мĕн пур хресченсемпе пĕрле РСФСР-чи хресченсем колхозсенче хăйсен пуйан та культурлă пурнăçне тăваççĕ. Октйабĕрти социалисăмла революци хыççăн ССР Союзĕнчи хресченсем помещиксен, каснан, мăнастирсен çĕрĕсене илнĕ 150 мĕлйун ытларах гектартан, РСФСР-чи хресченсем 100 мĕлйун гектар илнĕ.

РСФСР-че халĕ 173,3 пин колхоз, 2522 совхоз, 3937 МТС хисепленет. Хресченсенчен 92,6 процентĕ колхозсенче пĕрлешсе тăраççĕ.

Ĕлĕкхи сухапуçĕсем, йавăç сÿресем вырăнне халĕ колхозсемпе совхозсен уйхирĕсенче 90,5 пин комбайн, 235 пин трактăр ĕçлет. 1913 çулта акмали çĕр лаптăкĕ 69,7 мĕлйун гектар пулнă пулсан, 1937 çулта 93,4 мĕлйун гектара çитиччен ÿснĕ. Йалхуçалăхне социалисăмла урăхлатса çĕнетнине пула РСФСР-не йалхуçалăх продукцине тăвакан тата илсе тăракан районсене пайласси пĕтрĕ. Ĕлĕк йалхуçалăх продукцине илсе тăнă районсем халĕ хăйсем продукци тăвакан районсем пулса тăчĕç. Акмали çĕр лаптăкĕ ÿсни, тырпул тухăçĕ хăпарни çак районсене хăйсен тырпулĕпе тата пахча-çимĕçĕпе пурăнакан турĕ.

РСФСР йалхуçалăх продукци тăвас ĕçре ССР Союзĕнче пĕрремĕш вырăнта тăрать. ССР Союзĕн пĕтĕм йалхуçалăх продукцинчен 70 процентне РСФСР парать.

Совет влаçĕ пулнăранпа республикă территорийĕнче çĕнĕрен промышленнăçлă хуласем вуншар шăтса ÿрĕç. Вĕсем: Сталинск, Магнитогорск, Нижний Тагил, Сталиногорск, Березники, Комсомольск, Кировск, Игарка тата ыттисем те. Ĕлĕкхи хуласем палламала та мар пулса тăчĕç. Горький, Свердлăвск, Сталинград, Челябинск, Иванăвă. Новосибирск тата ытти хуласем промышленнăçлă тата культурлă пысăк центрсем пулса тăчĕç. РСФСР столицин—Мускав хулин сăн-сăпачĕ палламала мар улшăнчĕ,—вăл ССР Союзĕн столици.

Промышленнăçпа йалхуçалăхĕ хăвăрт ÿссе пыни—РСФСР ĕççынисен пурнăçĕпе культури çĕкленнипе пĕрле пулса пырать. Октйабĕрти Социалисăмла Аслă Революци РСФСР-чи пур ĕççыннисене те вĕренме, пĕлÿ илме, культурлă пурăнма çул уçса пачĕ.

Патша Российĕнче пуçламĕш тата вăтам шкулсенче пурĕ те 8 мĕлйун ача вĕреннĕ пулсан, халĕ пĕр РСФСР-че кăна пуçламĕшпе вăтам шкулсенче 20 мĕлйуна йахăн ача вĕренет.

1937 çулта РСФСР-че социаллă обеспечени ĕçне 1550 мĕлйун тенкĕ расхутланă, урăхла каласан, капиталисăмла 5 государствă: Швеци, Финьланди, Литва, Латви, Естони çĕршывĕсен пĕрле илсе шутланă пĕтĕм бюджетĕнчен ытларах расхутланă.

Ĕççыннисен пурнăçĕ хăвăрт лайăхланса пынипе, ĕççыннисен сывлăхĕшĕн хытă тăрăшнипе халăх йышĕ те хăвăрт ÿсрĕ. Çапла, 1913 çулта Мускавра кашни пин çын пуçне 7,6 çын хушăннă пулсан, 1936 çулта кашни пин çын пуçне 26,6 çын, урăхла каласан виçĕ хут ытларах хушăннă.

* * *

РСФСР—ССР Союзĕн уйăрăлми пайĕ пулса тăрать. РСФСР-че крайсемпе облăçсем 32, автономлă республикăсем 17, автономлă облăçсем 6, нацилĕ округсем 12 пур. РСФСР нумай нацилĕ государствă, унта кĕрекен республикăсем федеративлă майпа пĕрлешсе тăраççĕ. РСФСР-че пурăнакан халăхран, 4/5 пайĕ аслă вырăс халăхĕ, çак халăх помещиксемпе капиталиссен влаçне сĕмĕрсе тăкассишĕн, социалисăмшăн кĕрешес йалава малтан çĕкленĕ. Вăл хăй çеç мар ирĕке тухрĕ, ĕлĕк вырăс помещикĕсемпе капиталиссем пусмăрланă нумай нацисене ирĕке тухма, ирĕклĕ, тулли правалă пулма, телейлĕ те савăнăçлă пурнăç тума пулăшрĕ.

Вырăс халăхĕ хăйĕн ретĕнче талантлă, генилĕ çынсем нумай çитĕнтернĕ, вĕсем тĕнчери культурă виçине çĕкленĕ. Ломоносăв, Радищĕв, Пушкин, Белинский, Доброльубăв, Чернышевский, Некрасăв, Салтыков-Шчедрин, Л. Толстой, Чехăв, Горький, Репин, Сурикăв, Глинко, Чайковский, Римский-Корсаков, Лобачевский, Менделейĕв, Тимирйазĕв, Павлăв, Мичурин, Циолковский йачĕсене асăнни те çителĕклĕ.

В. И. Ленин вырăс халăхĕн талантĕ çинчен, унăн пултарулăхĕ, революцилĕ кĕрешÿри мухтавлă, историлĕ ĕçĕсем çинчен пĕрре çеç мар паллă тунă.

Вырăс халăхĕ економикăна, культурăна, искусствăна аталантарас ĕçре малти ретре пулса тĕнчери чи революцилĕ рабочи клас йертсе пынипе, етемлĕхе тĕнчери культурăн чи пысăк çитĕнÿне—Ленин—Сталин вĕрентÿне панă рабочи клас йертсе пынипе ытти халăхсене те хуçалăх тата культурă строительствин анлă çулĕ çине тухма пулăшрĕ.

РСФСР-не кĕрекен автономлă республикăсенче совет влаçĕ пулнăранпа шултра промышленнăç 9,5 хут ÿснĕ. Совет влаçĕ пулнăранпа Атăл тăрăхĕнчи нимĕçсен республикĕнчех çĕнĕрен пысăк предприйатисем 18 туса ĕçе йанă. Вăрçăччен хипе танлаштарсан, промышленнăç продукцийĕ 15 хут ÿснĕ.

Атăл тăрăхĕнчи нимĕçсен республикĕнчи хресченсене совет влаçĕ ĕмĕрлĕхе усă курма 1200 пин гектар çĕр панă, çав çĕрсем ĕлĕк помещиксемпе кулаксен аллинче пулнă. Хресченсем пурĕ 426 колхоза пĕрлешнĕ. Кашни колхозник килĕ пуçне вăтамран 17 гектар çĕр тивет. Октйабĕрти Социалисăмла Аслă Революциччен нимĕçсен вăтам тата аслă шкулсем пулман. Хальхи вăхăтра аслă шкулсем 3, рабфаксем 3, техникумсем 13 пур.

Дагестан АССР-че кантăк савăчĕ, консерва савăчĕ 4, ремонт-механически савăт, çăм хапрăкĕ, çĕрмамăкĕ тасатакан савăт тата електростанцисем чылай ĕçе йанă, нефть кăларакан вырăнта ĕçлеççĕ, пит те пысăк Гергебильгес тăваççĕ. Автономи илнĕренпе Дагестан АССР-че акмали çĕр лаптăкĕ 3 хут нумайланнă.

Адыгей халăхĕн патша самани вăхătĕнче хăйсен алфавичĕ те пулман, адыгейсем пурте тенĕ пекех хутла пĕлмен, халĕ адыгейсем 97 процент таран хутла пĕлеççĕ. 1917 çулта Адыгей территоринче пурĕ 17 учителĕ пулнă, 1937 çулта 1319 учителĕ тата 165 шкул пур. Адыгей автономлă облăçĕнче шкул строительствине валльи 1937 çулта 14 мĕлйун тенкĕ расхутланă.

Йакутинче революциччен хутла пĕлекен йакутсем 2 процент çеç пулнă пулсан, халĕ хутла пĕлекенсем 80 процентран ытла.

Патша Российĕнче башкир чĕлхипе кĕнеке тухман, совет влаçĕ условисенче, 1936 çулта башкир чĕлхипе 1105 екземпльар кĕнеке кăларнă.

Патша Российĕнче чăваш чĕлхипе хаçат тухман, 1936 çулта чăвашла 39 хаçат тухнă.

Пĕртан правалă Совет республикăсен тăванлă çемйинче малта пыракан вырăс халăхĕ РСФСР-не кĕрекен халăхсене çеç мар, Совет Союзĕн составне кĕрекен пур халăхсене те хуçалăхпа культурă тĕлĕшпе ÿссе пыма пулăшнă, пулăшать те.

Совет Союзне кĕрекен сойузлă республикăсен хуçалăхĕ хăвăрт ÿсни вырăс халăхĕ пулăшнин результачĕ пулать те ĕнтĕ. 1936 çулхи сведĕнисем тăрăх Белоруссин ССР-ĕн промышленнăçĕ вăрçăччен хипе, 1913 çулхипе танлаштарсан, 15,9 хут, Грузи ССР-ĕн—18,6 хут, Киргиз ССР-ĕн — 95 хут, Таджик ССР-ĕн — 116 хут ÿснĕ.

ССР Союзĕнчи халăхсен туслăхĕ çирĕп, ăна никам та çĕмĕрме пултараймасть. Таджикистанри тата Туркменистанри малта пыракан колхозниксемпе колхозницăсен партипе правительствăна йертсе пыракансемпе пĕрле пулнă канашлăвĕнче Сталин йулташ çапла каланă: „Çак канашлу ĕлĕк ССР Союзĕнчи халăхсем хушшинче шанманлăх пулнине тахçанах тĕп тунине йар уççăн кăтартса паракан ни пулса тăрать, шанманлăх пĕрне-пĕри туллин шанассипе улшăннă, ССР Союзĕнчи халăхсем хушшинче туслăх ÿсет тата çирĕпленет. Ку вăл, йулташсем, большевикла нацилĕ политикă пире мĕн панисенчен пуринчен те хакли".

ССР Союзĕнчи халăхсем хушшинчи туслăх—вăл революцире кĕрешсе илнĕ питĕ те пысăк ĕç. Мĕншĕн тесен, çак туслăх пур чухне пирĕн çĕршыври халăхсем ирĕклĕ пулаççĕ, вĕсене никам та çĕнтерме пултараймасть. Çак туслăх пурăннă чухне, вăл сывă пулнă чухне пире никам та, шалти тăшмансем те, тулти тăшмансем те хăрушă мар.

Халăхăн ылханлă тăшманĕсем, фашисăмăн йунлă йыттисем, троцкисла-бухаринла, национал-фашисла бандитсем, сынвĕлеренсем, шпионсем, вăрçă чĕртсе йаракансен банди пирĕн чечеклĕнекен çĕршыва империалисăмла йытăсен аллине пама, хамăр çĕршыври ĕççыннисене террор тата фашисла режим пусмăрĕ айне тума хăтланнă. Анчах провокатăрсен, сынвĕлеренсен, фашисăм йыттисен урса кайнă бандисен планĕ ниххçан та ĕçе кĕрес çук.

Совет Союзĕнчи халăхсем Ленин—Сталин партийĕ йертсе пынипе, Сталин йулташ йертсе пынипе хамăрăн чаплă тăван çĕршыва тулти тата шалти бандитсем таланасинчен çирĕп сыхлаççĕ.

Орденоноска Розă Абдуллина

Розă Абдуллина—Октябрь революцин тантăшĕ. Вăл 1917-мĕш çулта Тутар республикинчи Кљанчева йалĕнче çуралнă.

1921 çул. Выçлăх аптратса çитернипе Абдуллинăсен çемйи Çĕпĕре тухса кайат. Анчах сывлăхĕ начарланса кайнипе Розăн ашшĕ çул çинчех вилсе кайат, амăшĕ 6 пĕчĕк ачисемпе тăрса йулат. Вăл вăхăтра Розă 4 çулта пулнă.

Çĕпĕрте пилĕк çул пурăнсан Розăсен çемйи тăван йала кайала таврăнат. Çак çултан пуçласа Розă Агрыз станцине шкула çӳреме пуçлат. 1934 çулта 7-мĕш класран вĕренсе тухсан Агрыз депоне обтирщица пулса ĕçлеме кĕрет. Çамраклах производствăра ĕçлеме çăмăлах пулман. Анчах кайарахпа ĕçе хăнăхса çитсе, лайăх ĕçлеме пуçлат. Нормăна 150—180 процент таран тултарат. Ĕçлеме йуратнă вăл. Çавăнпа та вăл ĕçре нихçан та прогул, брак туман. Йаланах ӳссе пырат. Ленинла комсомол ретне кĕрет. Обшчĕствăлă ĕçсенче те вирлĕн хутшăнса ĕçлет. Депори рабочисем хушшинче хутпĕлменлĕхе пĕтерес ĕçпе те сахал мар ĕçлет. Кĕске вăхăт хушшинчех вăл 20 çынна хутла вĕрентсе кăларат. Кунсăр пуçне тата Розă чылай вăхăт хушши депора стена хаçат редакторĕ пулса ĕçлет.

1935 çулта производствăра лайăх тĕслĕхсем кăтартса ĕçленĕшĕн Л. М. Каганович Розăна „Ударнику Сталинского призыва" значок парса наградалат. Кун хыççăн Розă тата ытларах вăй хурса ĕçлеме пуçлат. Депора пĕрремĕш стахановка пулат.

Ыра ĕçшĕн, ĕçре çĕнĕ çĕнтерӳсем тунăшăн Розăна мартăн 8-мĕшĕнче (1936 çулта) Хусан чукунçулĕн начаљникĕ сехетпе парнелет. 1936 çулăн апрел уйăхĕнче Совет правителствин ăна „Знак почета" орденĕ парса наградалат. „Хамăн мĕн пур вăйа транспарт ĕçне вăйлатас çĕре хуратăп, ĕçре йаланах тĕрĕс те çирĕппĕн ĕçлесе пыма пулатăп"—çапла çеç калана Розă орден илнĕ хыççăн.

Кунсем васкасах иртеççĕ. Стахановла йухăмăн организаторне Розăна бригадир тăваççĕ. Ку ĕçре те вăл лайăх ĕçлесе пырат, бригадăна йĕркелесе йарат, плана 200—250 процент тултарса пырат.

Халљхи вăхăтра Розă Абдуллина Улатăрти транспарт комбинатĕнче вĕренет. Вĕренӳре йаланах „хорошо" паллăсем илсе пырат. Студентсем ун патне пулăшу ыйтма пыраççĕ, вăл вĕсене пулăшат, анланманнисене ăнлантарса парат. Çавăншăн ăна студентсем йurataççĕ. Вăл обшчĕствăлă ĕçсенче те хастарлăн ĕçлет. Вăл комсомол комитечĕн çекретарĕн иккĕмĕш заместителĕ, чукунçул транспарт работникĕсен сойузĕн Тĕпком членĕ.

Розă тата икĕ çултан чукунçул транспарчĕн командирĕ пулса тухат.

Розă Абдуллина çамрăк, 20 çулта кăна. Унăн пурнăçĕ Сталинла Конституцире çирĕппĕн курăнса тăрат. Розăн ĕмĕчĕ: лайăх вĕренмеле тата хастарлă ĕçлемеле.

А. Иванов.

Вăрман хатĕрлевĕ

Плана тултармалах

ВĂРНАР. Вăрман хатĕрлевĕнче пулса иртнĕ стахановла уйăхлăхра Çаракăл вăрманпунктĕнчи Иван Высоковский йулташ бригади членĕсем ĕç нормипе 350 процентшер тултарса пырса, кашни кун 47 тенкĕшер ĕçлесе илнĕ. Çавăн пекех Николай Левин бригади кулленхи ĕç нормине 325 процент тултарса пынă. Галдышĕв йулташ та кашни кун 4 мăшăр клешче хатĕрлес вырăнне 7-шер мăшăр хатĕрлесе пынă.

Мамалай, Нурăс, Уйкас, Малтикас, Шĕнер т. ыт. колхозсем вăрман хатĕрлев планне вăхăтра тултарассишĕн социалисăмлă ăмăртăва анлăн сарса йанипе, пĕрремĕш кварталти вăрман хатĕрлев планĕсене ытлашшипех тултарчĕç.

Çав вăхăтрах хăшпĕр колхозсем вăрманта чăтма çук начар ĕçлесе пыраççĕ. Кунта чи малтанах Утарти „Трактăр" колхоз çинчен каламала. Ку колхоз пайанхи куна çитсе те кварталти плана турттăрассипе 9 процент кăна тултарнă, хатĕрлессипе пĕр процент та тултарман. Ку колхозран вăрманта халĕ пĕр çын та ĕçлемест. Çавăн пекех Санарпуç, Çĕнйахакасси, Уйкас Йавăш, Упнер колхозĕсем те начар ĕçлесе пыраççĕ. Пайанхи куна вăл колхозсенчен вăрманта ĕçлекеннисем çук.

Вăрманпромхоз та кирлĕ пек ĕçлемест. Механизациленĕ вăйсемпе çителĕклĕн усă курмаççĕ. Вăрманпромхозăн пурĕ 14 автомашинăран мĕн пурĕ те 10 автомашинă çеç ĕçлет, 121 лучковăй пăчкăран пĕри те ĕçлемест.

Вăрманпромхоз руководителĕсем рабочисем хушшинче ĕç дисциплинине çирĕплетессишĕн, культмассăлă тата суту-илӳ ĕçĕсене лайăхлатассишĕн начар тăраççĕ. Лайăх примерсемпе ыттисене паллаштарас йĕнĕпе ĕçлемеççĕ. Вăрманпромхозпа вăрмуппункчĕсенчи статистиксем учот ĕçне йапăхтарса йанă.

Рабочисене кирлĕ таварсене çителĕклĕ тăратассине йĕркелемен. Хăшпĕр чухне вăрманта ĕçлекен рабочисем вальльи килнĕ йапаласене леспроторгра ĕçлекенсем хăйсем хушшинче салатса пĕтернĕ. Мартăн 11-мĕ леспроторг магазинне рабочисем вальльи калушсем килнĕ пулнă. Çав шутран магазинта ĕçлекенсем 20 мăшăрне илнĕ.

Вăрманпромхоз колхозсемпе, йалсоветсемпе çыхăнса ĕçлемест. Çапла ĕçленĕрен те ĕнтĕ вăрманпромхоз пĕрремĕш квартал планне тултараймарĕ, хатĕрлев планне 50 процент, турттарас плана 55 процент çеç тултарчĕ.

Вăрманпромхозăн çитес кварталсенче ку çитменлĕхсене тĕплĕн шута илсе, квартал планĕсене вăхăтра тултарса пымала.

Ст. Улангай.

Сӳрĕккĕн ĕçлеççĕ

Йĕпреç вăрманпромхозĕ пĕрремĕш квартал планне тултараймарĕ. Мартăн 26-не вăрман хатĕрлессине 72 процент, турттарассине 54,2 процент çеç тултарнă. Мĕнрен килчĕ-ха ку?

Чи пирвайах çакна калас пулат,—вăрманпромхоз аппаратĕнче, вăрман пункчĕсенче ĕçлекенсем февралĕн 10-мĕшпе мартăн 10-мĕшĕ хушшинче пулса иртнĕ стахановла уйăхлăхра тивĕçлипе ĕçлемен. Вĕсем квартал иртес умĕн тин хускалса стахановла уйăхлăх çинчен каласма пуçларĕç.

Социалисăмла ăмăртупа стахановла йухăма сарса пыманни, вăрманта ĕçлекенсем хушшинче политикăла-культурăла массăла ĕçе тивĕçлипе организацилеменни—çаксем пулса тăраççĕ начар ĕçленин сăлтавĕсем. Çак пысăк çитменлĕхсене вăрманпромхоз директорĕ Шипунов йулташ хăй те йышăнат. Анчах вăл çав çитменлĕхсене пĕтерес тесе, плана срукра тултарас тесе мĕнле ĕçсем тунине каласа пама пултараймаст.

Вăрман ĕçĕнче стахановла ĕçлекенсем сахал мар. Акă, Йакăв Барайĕв лучковăй пăчкăпа ĕçлесе, нормăна 227 процент тултарса пырат. Михаил Соломодин та кулленхи нормăна 200 процента йахăн тултарат. Тата Чурачăк йалĕнчи Григорий Наумăв (57 çулта) хăйĕн ывăлĕпе—Николай Наумăвпа пĕрле нормăна 140—147 процентшер тултараççĕ. Наумăвпа унăн ывăлĕ февральпе март уйăхĕсенче 385 фесметр вăрман касса хатĕрлесе, уйăхра 350-шар тенкĕ ĕçлесе илнĕ. Кун пек паха тĕслĕхсем кăтартакан паллă стахановецсем 160 çынна çитеççĕ.

Анчах, вăрманпромхоз çав паллă та пултарулă çынсен паха опычĕсене ытти рабочисем хушшинче анлăн сарман. Стахановецсемпе производствăлă канашлусем ирттерменпе пĕрех.

Çавнашкал ӳрĕк-сӳрĕк ĕçленипе ĕнтĕ пĕрремĕш кварталта вăрман хатĕрлев планĕ вăрахăн пурнăçланса пычĕ. Уйрăмах кунта Йĕпреç районĕ чăтма çук йапăх ĕçлесе пырат. Квартал планне вăл хатĕрлессипе 37,6 процент, турттарса кăларассипе 5,1 процент çеç пурнăçланă.

Вăрманшăн большевикла кĕрешекен районсенчен пĕри вăл—Шăнкăртам районĕ. Шăнкăртам районĕ касса хатĕрлессин квартал планне, мартăн 20-мĕшĕпчех 116 процент, турттарса кăларассине 70 процент пурнăçланă. Çавăнпа та ытти районсен ку ĕçре шăнкăртамсенчен пример илсе, плана çак кунсенчех тултарассипĕн кĕрешмеле.

Дм. Михайлăв.

Хатĕрленĕ чул çырмарах выртат

Аслă Тугаљ йалсоветĕ (Çĕрпӳ р-нĕ) çулйĕр планне тултарас тĕлĕшпе чăтма çук начар ĕçлет. Кăçал колхозăн 1200 кубла метр хăйăр, 400 кубла метр чул кăларса турттармала пулсан, ку таранччен пĕтĕмпе те 40 кубла метр хăйăр тата 69 кубла метр чул кăларнă. Анчах кăларнă чулĕ те çырмарах выртат. Ку тĕлĕшпе йалсовета кĕрекен колхозсем те йĕрипен ĕçлеççĕ. Халĕ те çулйĕр строителстви вальльи материалсем хатĕрлессипе ĕçлени курăнмаст.

И. Йегорăв.

Пĕтĕм Сойузри Йалхуçалăх Выставкин Комитечĕ 1938 çулхи мартăн 26-мĕшĕнче йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИ

Пĕтĕм Сойузри Йалхуçалăх Выставкин Комитечĕ выставкăра пулма „Тĕштырă" павилйонĕ тăрăх пĕрремĕш спискăпа Чăваш республикинчен 98 колхоза кандидата çирĕплетнĕ. Вăл кандидатсен шутне 1937 çулта кашни гектар пуçне 15 центнертан кайа мар тĕштырă туса илнĕ çак колхозсем кĕреççĕ:

1. „Çалтăр" колхоз (Патăрйел районĕ),—вăл 1937 çулта 620,8 гектар çĕр лаптăкĕ çинче кашни гектартан 24,9 центнĕр тĕштырă илнĕ.

2. Ленин йачĕпе тăракан колхоз (Пăрачкав районĕ),—вăл 1937 çулта 92 гектар çĕр лаптăкĕнчен кашни гектартан 22 центнĕр тĕштырă илнĕ.

3. „Хĕрлĕ паттăр" колхоз (Тутаркас районĕ),—вăл 1937 çулта 121,1 гектар çĕр лаптăкĕнчен кашни гектартан 21,1 центнĕр тĕштырă илнĕ.

4. „Хĕрлĕ Туçа" колхоз (Патăрйел районĕ),—вăл 1937 çулта 671,8 гектар çĕр лаптăкĕнчен кашни гектартан 21,6 центнĕр тĕштырă илнĕ.

5. „Динамо" колхоз (Куславкка районĕ),—вăл 1937 çулта 256,1 гектар çĕр лаптăкĕнчен кашни гектартан 21,6 центнĕр тĕштырă илнĕ.

6. „Совет" колхоз (Турхан районĕ),—вăл 1937 çулта 85,9 гектар çĕр лаптăкĕнчен кашни гектартан 21,5 центнĕр тĕштырă илнĕ.

7. „Çĕнтерӳ" колхоз (Вăрнар районĕ),—вăл 1937 çулта 517 гектар çĕр лаптăкĕнчен кашни гектартан 21,3 центнĕр тĕштырă илнĕ.

8. „Ĕмĕт" колхоз (Çĕрпӳ районĕ),—вăл 1937 çулта 243,8 гектар çĕр лаптăкĕнчен кашни гектартан 20,9 центнĕр тĕштырă илнĕ.

9. „Правда" колхоз (Вăрнар районĕ),—вăл 1937 çулта 112,5 гектар çĕр лаптăкĕнчен гектартан 20,9 центнĕр тĕштырă илнĕ.

10. „Çамрăк колхозник" колхоз (Вăрнар районĕ),—вăл 157 гектар çĕр лаптăкĕнчен кашни гектартан 20,6 центнĕр тĕштырă илнĕ.

11. „Майăн 1-мĕшĕ" колхоз (Çĕмĕрле районĕ),—вăл 1937 çулта 31 гектар çĕр лаптăкĕнчен кашни гектартан 20,4 центнĕр тĕштырă илнĕ.

12. „Майăн 1-мĕшĕ" колхоз (Уравăш йалĕ, Вăрнар районĕ),—вăл 1937 çулта 2 5,8 гектар çĕр лаптăкĕнчен кашни гектартан 20,2 центнĕр тĕштырă илнĕ.

13. Ленин йачĕпе тăракан колхоз (Вăрнар районĕ),—вăл 1937 çулта 479,5 гектар çĕр лаптăкĕнчен кашни гектартан 20 центнĕр тĕштырă илнĕ.

14. Молотăв йачĕпе тăракан колхоз (Вăрнар районĕ), — вăл 1937 çулта 173 гектар çĕр лаптăкĕнчен кашни гектартан 19,8 центнĕр тĕштырă илнĕ.

15. „Авангард" колхоз (Турхан районĕ),—вăл 1937 çулта 140 гектар çĕр лаптăкĕнчен кашни гектартан 19,7 центнĕр тĕштырă илнĕ.

16. „Красный бор" колхоз (Пăрачкав районĕ),—вăл 1937 çулта 31 гектар çĕр лаптăкĕнчен кашни гектартан 19,7 центнĕр тĕштырă илнĕ.

17. „Çĕнтерӳ" колхоз (Турхан р.),—вăл 1937 çулта 192,8 гектар çĕр лаптăкĕнчен кашни гектартан 19,6 центнĕр тĕштырă илнĕ.

18. „Çĕнĕ Йунка" колхоз (Тутаркас р.),—вăл 1937 çулта 145,1 гектар çĕр лаптăкĕнчен кашни гектартан 19,6 центнĕр тĕштырă илнĕ.

19. „Хĕвелтухăç" колхоз (Турхан р.),—вăл 1937 çулта 195,1 гектар çĕр лаптăкĕнчен кашни гектартан 19,5 центнĕр тĕштырă илнĕ.

20. „Йулташ" колхоз (Шăмăршă р.),—вăл 1937 çулта 357,1 гектар çĕр лаптăкĕнчен кашни гектартан 19,4 центнĕр тĕштырă илнĕ.

21. „Хĕрлĕ сухаç" колхоз (Пăрачкав р.),—вăл 1937 çулта 311 гектар çĕр лаптăкĕнчен кашни гектартан 19,4 центнĕр тĕштырă илнĕ.

22. „Хĕрлĕ çалтăр" колхоз (Канаш р.),—вăл 1937 çулта 261,2 гектар çĕр лаптăкĕнчен кашни гектартан 19,3 центнĕр тĕштырă илнĕ.

23. „Пĕрлешӳ" колхоз (Малтикас йалĕ, Вăрнар р.),—вăл 1937 çулта 213 гектар çĕр лаптăкĕнчен кашни гектартан 19,3 центнĕр тĕштырă илнĕ.

24. „Хастар" колхоз (Турхан р.),—вăл 1937 çулта 115,4 гектар çĕр лаптăкĕнчен кашни гектартан 19,3 центнĕр тĕштырă илнĕ.

25. „Кĕçĕн Çавал" колхоз (Çĕрпӳ р.),—вăл 1937 çулта 268 гектар çĕр лаптăкĕнчен кашни гектартан 19,2 центнĕр тĕштырă илнĕ.

26. Буденный йачĕпе тăракан колхоз (Тутаркас р.),—вăл 1937 çулта 166 гектар çĕр лаптăкĕнчен кашни гектартан 19,2 центнĕр тĕштырă илнĕ.

27. „Октябрь йалавĕ" колхоз (Патăрйел р.),—вăл 1937 çулта 279,4 гектар çĕр лаптăкĕнчен кашни гектартан 19,2 центнĕр тĕштырă илнĕ.

28. Розă Люксембург йачĕпе тăракан колхоз (Патăрйел р.),—вăл 1937 çулта 351,9 гектар çĕр лаптăкĕнчен кашни гектартан 18,9 центнĕр тĕштырă илнĕ.

29. Кирăв йачĕпе тăракан колхоз (Вăрнар р.),—вăл 1937 çулта 73,6 гектар çĕр лаптăкĕнчен кашни гектартан 18,8 центнĕр тĕштырă илнĕ.

30. Сталин йачĕпе тăракан колхоз (Çĕнĕ Йахакасси йалĕ, Вăрнар р.),—вăл 1937 çулта 318,2 гектар çĕр лаптăкĕнчен кашни гектартан 18,7 центнĕр тĕштырă илнĕ.

31. Ворошилăв йачĕпе тăракан колхоз (Çĕмĕрле р.)—вăл 1937 çулта 101 гектар çĕр лаптăкĕнчен кашни гектартан 18,6 центнĕр тĕштырă илнĕ.

32. „Подборное" колхоз (Çĕмĕрле р.),—вăл 1937 çулта 55,3 гектар çĕр лаптăкĕнчен кашни гектартан 18,6 центнĕр тĕштырă илнĕ.

33. Чапайĕв йачĕпе тăракан колхоз (Тăвай р.)—вăл 1937 çулта 369,5 гектар çĕр лаптăкĕнчен кашни гектартан 18,4 центнĕр тĕштырă илнĕ.

34. „Культура" колхоз (Тăвай р.),—вăл 1937 çулта 270,7 гектар çĕр лаптăкĕнчен кашни гектартан 18,4 центнĕр тĕштырă илнĕ.

35. Горький йачĕпе тăракан колхоз (Канаш р.),—вăл 1937 çулта 260,8 гектар çĕр лаптăкĕнчен кашни гектар пуçне 18,4 центнĕр тĕштырă илнĕ.

36. „Сейатель" колхоз (Тутаркас р.), — вăл 1937 çулта 128,8 гектар çĕр лаптăкĕнчен кашни гектартан 18,4 центнĕр тĕштырă илнĕ.

37. Молотăв йачĕпе тăракан колхоз (Шупашкар р.),—вăл 1937 çулта 76,9 гектар çĕр лаптăкĕнчен кашни гектартан 18,3 центнĕр тĕштырă илнĕ.

38. Ворошилăв йачĕпе тăракан колхоз (Мамалайĕвск йалĕ, Вăрнар р.),—вăл 1937 çулта 222 гектар çĕр лаптăкĕнчен кашни гектартан 18,1 центнĕр тĕштырă илнĕ.

39. „Горьковская Коммуна" колхоз (Тăвай р.),—вăл 1937 çулта 491,3 гектар çĕр лаптăкĕнчен кашни гектартан 17,9 центнĕр тĕштырă илнĕ.

40. „Çĕнĕ çул" колхоз (Тăвай р.),—вăл 1937 çулта 270 гектар çĕр лаптăкĕнчен кашни гектартан 17,9 центнĕр тĕштырă илнĕ.

41. Коминтерн йачĕпе тăракан колхоз (Елĕк р.),—вăл 1937 çулта 83 гектар çĕр лаптăкĕнчен кашни гектартан 17,9 центнĕр тĕштырă илнĕ.

42. „Майăн 1-мĕшĕ" колхоз (Елĕк р.),—вăл 1937 çулта 64,4 гектар çĕр лаптăкĕнчен кашни гектартан 17,9 центнĕр тĕштырă илнĕ.

43. „Хурçă" колхоз (Тăвай р.),—вăл 1937 çулта 594,5 гектар çĕр лаптăкĕнчен кашни гектартан 17,8 центнĕр тĕштырă илнĕ.

44. Чапайĕв йачĕпе тăракан колхоз (Вăрнар р.),—вăл 1937 çулта 238 гектар çĕр лаптăкĕнчен кашни гектартан 17,8 центнĕр тĕштырă илнĕ.

45. Каганович йачĕпе тăракан колхоз (Вăрнар р.),—вăл 1937 çулта 219,1 гектар çĕр лаптăкĕнчен кашни гектартан 17,8 центнĕр тĕштырă илнĕ.

46. „Пионер" колхоз (Тутаркас р.),—вăл 1937 çулта 74,5 гектар çĕр лаптăкĕнчен кашни гектартан 17,8 центнĕр тĕштырă илнĕ.

47. Сталин йачĕпе тăракан колхоз (Патăрйел р.),—вăл 1937 çулта 932,8 гектар çĕр лаптăкĕнчен кашни гектартан 17,7 центнĕр тĕштырă илнĕ.

48. „Хĕрлĕ Кĕтне" колхоз (Вăрмар р.),—вăл 1937 çулта 314,8 гектар çĕр лаптăкĕнчен кашни гектартан 17,7 центнĕр тĕштырă илнĕ.

49. „Мотор" колхоз (Канаш р.),—вăл 1937 çулта 522,6 гектар çĕр лаптăкĕнчен кашни гектартан 17,6 центнĕр тĕштырă илнĕ.

50. „Маяк революции" колхоз (Пăрачкав р.),—вăл 1937 çулта 226 гектар çĕр лаптăкĕнчен кашни гектартан 17,5 центнĕр тĕштырă илнĕ.

51. „Хĕрлĕ Сормăвă" колхоз (Тутаркас р.),—вăл 1937 çулта 202,2 гектар çĕр лаптăкĕнчен кашни гектартан 17,6 центнĕр тĕштырă илнĕ.

52. „Социалисăм" колхоз (Елĕк р-нĕ),—вăл 1937 çулта 172,1 гектар çĕр лаптăкĕнчен кашни гектартан 17,5 центнĕр тĕштырă илнĕ.

53. „Комбайн" колхоз (Елĕк р.),—вăл 1937 çулта 163 гектар çĕр лаптăкĕнчен кашни гектартан 17,5 центнĕр тĕштырă илнĕ.

54. „Кочаковец" колхоз (Шупашкар р.),—вăл 1937 çулта 119 гектар çĕр лаптăкĕнчен кашни гектартан 17,5 центнĕр тĕштырă илнĕ.

55. „Заря" колхоз (Шупашкар р-нĕ),—вăл 1937 çулта 113 гектар çĕр лаптăкĕнчен кашни гектартан 17,5 центнĕр тĕштырă илнĕ.

56. „Доброволец" колхоз (Елĕк р-нĕ),—вăл 1937 çулта 484,5 гектар çĕр лаптăкĕнчен кашни гектартан 17,4 центнĕр тĕштырă илнĕ.

57. „Красноармеец" колхоз (Канаш р.),—вăл 1937 çулта 62,1 гектар çĕр лаптăкĕнчен кашни гектартан 17,2 центнĕр тĕштырă илнĕ.

58. „Октябрь" колхоз (Турхан р-нĕ),—вăл 1937 çулта 370,1 гектар çĕр лаптăкĕнчен кашни гектартан 17,1 центнĕр тĕштырă илнĕ.

59. „Хĕрлĕ хĕвелтухăç" колхоз (Çĕрпӳ р.),—вăл 1937 çулта 155,7 гектар çĕр лаптăкĕнчен кашни гектартан 17,1 центнĕр тĕштырă илнĕ.

60. „Труд" колхоз (Елĕк р.),—вăл 1937 çулта 145,2 гектар çĕр лаптăкĕнчен кашни гектартан 17,1 центнĕр тĕштырă илнĕ.

61. „Радио" колхоз (Хĕрлĕ Чутай р.),—вăл 1937 çулта 81,3 гектар çĕр лаптăкĕнчен кашни гектартан 17,1 центнĕр тĕштырă илнĕ.

62. Доронин йачĕпе тăракан колхоз (Канаш р.),—вăл 1937 çулта 448,5 гектар çĕр лаптăкĕнчен кашни гектартан 17 центнĕр тĕштырă илнĕ.

63. Ленин йачĕпе тăракан колхоз (Пысăк Турхан йалĕ, Вăрнар р.),—вăл 1937 çулта 267 гектар çĕр лаптăкĕнчен кашни гектартан 17 центнĕр тĕштырă илнĕ.

64. „Смычка" колхоз (Елĕк р.),—вăл 1937 çулта 206,6 гектар çĕр лаптăкĕнчен кашни гектартан 17 центнĕр тĕштырă илнĕ.

65. Кирăв йачĕпе тăракан колхоз (Пăрачкав р.),—вăл 1937 çулта 420 гектар çĕр лаптăкĕнчен кашни гектартан 16,9 центнĕр тĕштырă илнĕ.

66. Молотăв йачĕпе тăракан колхоз (Пăрачкав р.),—вăл 1937 çулта 203 гектар çĕр лаптăкĕнчен кашни гектартан 16,9 центнĕр тĕштырă илнĕ.

67. „Хĕрлĕ паттăр" колхоз (Çĕрпӳ р.),—вăл 1937 çулта 112,9 гектар çĕр лаптăкĕнчен кашни гектартан 16,9 центнĕр тĕштырă илнĕ.

68. „Майăн 1-мĕшĕ" колхоз (Тăвай р.),—вăл 1937 çулта 363,1 гектар çĕр лаптăкĕнчен кашни гектартан 16,8 центнĕр тĕштырă илнĕ.

69. „Искра Ильича" колхоз (Тăвай р.),—вăл 1937 çулта 2[illegible]6,2 гектар çĕр лаптăкĕнчен кашни гектартан 16,8 центнĕр тĕштырă илнĕ.

70. „Коминтерн" колхоз (Çĕмĕрле р.),—вăл 1937 çулта 261,2 гектар çĕр лаптăкĕнчен кашни гектартан 16,8 центнĕр тĕштырă илнĕ.

71. „Хĕрлĕ Марат" колхоз (Вăрмар р.),—вăл 1937 çулта 212,5 гектар çĕр лаптăкĕнчен кашни гектартан 16,7 центнĕр тĕштырă илнĕ.

72. „Çĕнĕ йал" колхоз (Шупашкар р.),—вăл 1937 çулта 125,4 гектар çĕр лаптăкĕнчен кашни гектартан 16,7 центнĕр тĕштырă илнĕ.

73. „Прогресс" колхоз (Пăрачкав р.),—вăл 1937 çулта 98 гектар çĕр лаптăкĕнчен кашни гектартан 16,7 центнĕр тĕштырă илнĕ.

74. „Большевик" колхоз (Вăрмар р-нĕ),—вăл 1937 çулта 665 гектар çĕр лаптăкĕнчен кашни гектартан 16,6 центнĕр тĕштырă илнĕ.

75. Карл Маркс йачĕпе тăракан колхоз (Ишлей р.),—вăл 1937 çулта 229,3 гектар çĕр лаптăкĕнчен кашни гектартан 16,5 центнĕр тĕштырă илнĕ.

76. „Коммунар" колхоз (Елĕк р-нĕ),—вăл 1937 çулта 160 гектар çĕр лаптăкĕнчен кашни гектартан 16,5 центнĕр тĕштырă илнĕ.

77. „Çурлапа Мăлатук" колхоз (Шупашкар р.),—вăл 1937 çулта 127 гектар çĕр лаптăкĕнчен кашни гектартан 16,5 центнĕр тĕштырă илнĕ.

78. „Труд" колхоз (Малтикасси йалсоветĕ, Елĕк р.),—вăл 1937 ç. 340,7 гектар çĕр лаптăкĕнчен кашни гектартан 16,4 центнĕр тĕштырă илнĕ.

79. „Çĕнĕ пурнăç" колхоз (Хĕрлĕ Чутай р.),—вăл 1937 çулта 154,1 гектар çĕр лаптăкĕнчен кашни гектартан 16,4 центнĕр тĕштырă илнĕ.

80. „Заря" колхоз (Кадĕркасси йалĕ, Шупашкар р.),—вăл 1937 ç. 129,8 гектар çĕр лаптăкĕнчен кашни гектартан 16,4 центнĕр тĕштырă илнĕ.

81. „Крестьянская газета" колхоз (Йетĕрне р.),—вăл 1937 çулта 241,5 гектар çĕр лаптăкĕнчен кашни гектартан 16,2 центнĕр тĕштырă илнĕ.

82. „Çĕнĕ вăй" колхоз (Çĕрпӳ р.),—вăл 1937 çулта 224,4 гектар çĕр лаптăкĕнчен кашни гектартан 16,1 центнĕр тĕштырă илнĕ.

83. „Çĕнĕ йала" колхоз (Йетĕрне районĕ),—вăл 1937 çулта 150,9 гектар çĕр лаптăкĕнчен кашни гектартан 16,1 центнĕр тĕштырă илнĕ.

84. „Труд" колхоз (Шупашкар районĕ),—вăл 1937 çулта 102 гектар çĕр лаптăкĕнчен кашни гектартан 16,1 центнĕр тĕштырă илнĕ.

85. Ворошилăв йачĕпе тăракан колхоз (Пăрачкав р.),—вăл 1937 çулта 200 гектар çĕр лаптăкĕнчен кашни гектартан 16 центнĕр тĕштырă илнĕ.

86. „Малала" колхоз (Çĕрпӳ р.),—вăл 1937 çулта 340,1 гектар çĕр лаптăкĕнчен кашни гектартан 15,7 центнĕр тĕштырă илнĕ.

87. „Коминтерн" колхоз (Çĕрпӳ р-нĕ),—вăл 1937 çулта 276,4 гектар çĕр лаптăкĕнчен кашни гектартан 15,7 центнĕр тĕштырă илнĕ.

88. Ленин йачĕпе тăракан колхоз (Турхан р.),—вăл 1937 çулта 183 гектар çĕр лаптăкĕнчен кашни гектартан 15,7 центнĕр тĕштырă илнĕ.

89. Калинин йачĕпе тăракан колхоз (Йетĕрне р.),—вăл 1937 çулта 82,4 гектар çĕр лаптăкĕнчен кашни гектартан 15,7 центнĕр тĕштырă илнĕ.

90. „Свободный труд" колхоз (Тăвай р.),—вăл 1937 çулта 572,1 гектар çĕр лаптăкĕнчен кашни гектартан 15,6 центнĕр тĕштырă илнĕ.

91. „Луч" колхоз (Пăрачкав р.),—вăл 1937 çулта 375 гектар çĕр лаптăкĕнчен кашни гектартан 15,6 центнĕр тĕштырă илнĕ.

92. „Кормилец" колхоз (Шупашкар р.),—вăл 1937 çулта 282,5 гектар çĕр лаптăкĕнчен кашни гектартан 15,6 центнĕр тĕштырă илнĕ.

93. Сталин йачĕпе тăракан колхоз (Тутаркас р.),—вăл 1937 çулта 152 гектар çĕр лаптăкĕнчен кашни гектартан 15,5 центнĕр тĕштырă илнĕ.

94. Чăваш Тĕпĕçтăвкомĕ йачĕпе тăракан колхоз (Канаш р.),—вăл 1937 çулта 123,2 гектар çĕр лаптăкĕнчен кашни гектартан 15,5 центнĕр тĕштырă илнĕ.

95. „Молот" колхоз (Çĕрпӳ р.),—вăл 1937 çулта 151,2 гектар çĕр лаптăкĕнчен кашни гектартан 15,4 центнĕр тĕштырă илнĕ.

96. „Хĕрлĕ Çар" колхоз (Канаш р.),—вăл 1937 çулта 386 гектар çĕр лаптăкĕнчен кашни гектартан 15,2 центнĕр тĕштырă илнĕ.

97. Литвинăв йачĕпе тăракан колхоз (Вăрнар р.),—вăл 1937 çулта 380 гектар çĕр лаптăкĕнчен кашни гектартан 15,1 центнĕр тĕштырă илнĕ.

98. „Правда" колхоз (Елĕк р.),—вăл 1937 çулта 304 гектар çĕр лаптăкĕнчен кашни гектартан 15,1 центнĕр тĕштырă илнĕ.

Йалхуçалăх машинисемпе ĕçхатĕрĕсем

Пирĕн партипе правителствă совхозсемпе колхозсене çултан çул вĕрçĕнĕ йалхуçалăх машинĕсемпе хĕçпăшаллантарса пыраççĕ. Пирĕн республикăра та машина-трактăрлă станцисем, вĕсенчи машинисемпе ĕçхатĕрĕсем ӳссех пыраççĕ.

1937 çулта Чăваш республикине ССР Сойузĕн йалхуçалăх снабженин кантурĕ урла ССРС Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн çиçтеминче тăракан хуçалăхсем вальльи йалхуçалăх машинисемпе хатĕрсем çакăн чухлĕ килнĕ: лашапа ĕçлемели икĕ касăлă плугсем—410; трактăрпа ĕçлемели 24 ретлĕ Т-8 маркăлă çейăлкăсем—100; лашапа ĕçлемели сошниклĕ 13 ретлĕ çейăлкăсем—124; лашапа ĕçлемели креплесем—18; вырса хăй пăрахса пыракан жнейкăсем—134; клейтон (№ 5 маркăлă) сортировкăсем—14; ырашпа тулă тасатмали трийĕрсем—80 тата ытти тĕрлĕ машинăсем те колхозсемпе совхозсене сутнă.

1938 çулта, йалхуçалăх снабженин палăртнă тăрăх, йалхуçалăх машинĕсемпе хатĕрĕсене пĕлтĕрхипе танаштарсан ытларах илсе килеççĕ. Çамахран, пĕр касăлă плугсем—150; икĕ касăлă плугсем—500; лашапа ĕçлемели лушчильниксем—250; зиг-заг сӳресем—400; трактăрпа ĕçлемели УТК маркăлă культиватăрсем—150; лашапа ĕçлемели КК-8 маркăлă культиватăр-полольниксем—50; пружинăлă культиватăрсем—300; лашапа ĕçлемели окучниксем—300; трактăрпа ĕçлемели 24 ретлĕ Т-8 маркăла çейăлкăсем—300; лашапа ĕçлемели 13 ретлĕ сошниклĕ çейăлкăсем—20; утă çулмали машинăсем—100; лашапа ĕçлемели креплесем—100; вырса хăй пăрахса пыракан жнейкăсем—400; „Триумф" сортировкăсем—80; клейтон (№ 5 маркăлă) сортировкăсем—100; ырашпа тулă тасатмали трийĕрсем—50; çĕрулми лартмали машинăсем—40; клевĕр вăрри тасатмали машинăсем—30; кантăр тылламали машинăсем—20; йĕтĕн тылламали машинăсем—30 тата ытти тĕрлĕ машинăсем те килеççĕ.

Румынири çĕнĕ правительстви

Патриарх Кристеа пуç пулса йертсе пыракан Румыни правительстви мартăн 30-мĕшĕнче отставкăна тухнă. Патриарх Кристеа халĕ Румынин çĕнĕ правительствине тунă. Çĕнĕ правителетвă, тĕпрен илсен, кун умĕнхи правительствăра пулнă çынсенченех чăмăртаннă. Урăх çĕршыв ĕçĕсен министрне Петреску-Комнена, фашисла Германи майлă тăраканскерне, лартнă. Вăл Берлинра 1933 çултанпа Румыни посланникĕ пулса ĕçленĕ.

Çĕнĕрен тунă правительствă хăйĕн чи пирвайхи ларăвĕнче чылай решенисем йышăннă, сăмахран, политикăлă партисене, фашисла партисемсĕр пуçне, салатса йарасси çинчен, йатарласа королевствă составĕ тăвасси çинчен тата економикăлă аслă совет тăвасси çинчен решенисем йышăннă.

Францири политикăлла çынсем хушшинче çапла шутлаççĕ: Румынин çĕнĕ правительстви Румыни малашне те фашисланса пынине палăртаканни пулса тăрат,—теççĕ.

(ТАСС).

Германи çарĕсемпе вăрçă хатĕрĕсем çурçĕр Испанире

Испанин оборонă министĕрстви фашисла Германи Испанири интервенцире хутшăннине кăтартакан çĕнĕ фактсем çинчен пĕлтерет. Германирен çарсемпе вăрçă хатĕрĕсене Бильбаопа Пасахес порчĕсем урлă илсе килсе тăраççĕ. Çак портсем чăннипех те Германин çар базисем пулса тăнă. Вĕсене фашисла Германин йатарласа тунă „легион кондор" текен çар организацийĕ контролесе тăрат.

Йулашки вăхăтра çак портсенче Германирен истребителсемпе бомбардировщиксем пурĕ 140 илсе килнĕ. Кунсăр пуçне авиацин тĕрлĕ снарйаженийĕсене те нумай пушатнă.

Вăл самолетсене пайăн-пайăн уйăрса, авиаци снарйаженийĕсемпе пĕрле „легион кондор" грузовикĕсемпе Бургосри, Виторири тата Авилри аеродромсене илсе çитернĕ.

Авилре Германин авиаци полкĕ вырăнти çар казармисене йышăнса тăрат. Полка Германин Берлин, Мÿнхен тата Франкфурт çывăхĕнче вырнаçса тăракан авиаци чаçĕсенчи çынсенчен тунă.

Çавăн пекех Испани порчĕсене Германирен тупăсем те нумай илсе килнĕ. Илсе килнĕ чух вĕсене Германи хулисенче гарнизонсенчей пухнă артиллериссем хÿтлесе пынă.

Германире туса кăларнă 30 пысăк калибрлă тупăсене Франципе Испани хушшинчи чикĕре стратегилĕ пунктсем тăрăх вырнаçтараççĕ. Вĕсен вырнаçтарса лартнă çĕре испанĕцсене никама та йамаççĕ. Германи офицерĕсем: çак вăрçа хатĕрленес тĕлĕшпе тăвакан ĕçсене пурне те Германипе Франци хушшинче пулас вăрçă валли хатĕрлеççĕ,—тесе уççăнах калаççĕ.

(ТАСС).

Доменико Начито пурнăçĕпе вилĕмĕ

Доменико Начито кăнтăр Итали провинцисенчен пĕрин—Калабрийа провинцин хресченĕ пулнă. Унта хресченсен пурнăçĕ питех те йухăннă, пурăнакан çынсенчен пысăкрах пайĕ хут пĕлмест, унти батрак тăватă лиршăн (Италире кило çăкăр икĕ лир тăрат) ирпе кăвак çутăла пуçласа каçчен ĕçлет. Анчах Начито тахçанах ĕççĕр тăрса йулнă пулнă, ăна Калабрири ĕççĕр тăрса йулнă нумай пин çынсем илме тăрăшакан тăватă лира илесси те пысăк тупăш пек туйăннă. Çавăнпа та ăна „рабочипе салтак" пулса Абиççинине кайма сĕнсессĕн, тата хăй кайсан çемйине пулăшу парса тăрасси çинчен пĕлтерсен, вăл килĕшнĕ.

Темиçе кун хушши тинĕс тăрăх кайнă хыççăн, вăл пачах та Африкăна мар, Испанине пырса çитнине пĕлсен, Начитопа ытти унпеккисемшĕн çителĕклех тĕлĕнмеле пулса тăнă.

Çак вăл пĕр çулталăк кайарах пулнă. Начитопа унăн йулташĕсене Гвадалахарă фронтĕнчи Итали чаçĕсен составне хутшăнтарнă. Кунта сĕннисем Италин ĕлĕкрех йанă салтакĕсенчен нумайĕш итальйанцăсем хăйсен офицерĕсем „пăлхав" тунăшăн тесе персе вĕлернипе вилсе пĕтнине пĕлнĕ.

Пĕрре çĕрле, окопра ларакан Начито сасартăках радио сассине илтет. „Тăвансем,—калаçнă радио,—фашиссем сире улталанă. Кама хирĕç вăрçатăр есĕр? Испанипе Итали халăхĕн ирĕклĕхне хирĕç. Епĕр, фашисăма хирĕç кĕрешекенсем,—итальйанĕцсем. Епĕр ирĕклĕхшĕн кĕрешекĕн Джузеппе Гарибальди йачĕпе тăракан батальйонра тăратпăр. Куçăр пирĕн пата Италири тата тĕнчери фашисăма хирĕç кĕрешме!"

Начито тарăн шухăша кайнă, тата тепĕр икĕ талăкран çĕрле, винтовкă тата патронсем илсе, хăйĕн йулташĕпе пĕрле вăл гарибальдийĕцсен линисем патнелле асăрхануллă упаленсе шума тытăннă. Вĕсем çурма çула кăна çитме ĕлкĕрнĕ, фашиссен йенчен вĕсене курса, вĕсем çинелле пулеметсемпе пеме пуçланă. Начитона икĕ çĕртен амантнă пулнă, анчах йулташĕ ăна пăрахса хăварман. Кăшт пеме лăплансанах вăл Начитона çурăмĕ çине хурса çĕрлехи тĕттĕмлĕхпе хÿтленсе республиканĕцсен окопĕсем патне илсе çитернĕ.


Гарибальди батальйонĕнчи врачсем Начито çине çав тери йуратса, кăмăллăн пăхнă, ун хыççăн Мадридри госпитале ăсатнă. Виçĕ уйăхран вăл йалтах сывалса çитнĕ те çак хушăра бригадăна ÿссе çитĕннĕ, Гарибальди йачĕпе тăракан батальйона йама ыйтнă. Начитона иккĕмĕш батальйонри виççĕмĕш ротăна йанă. Çулталăка йахăнах пурăннă вăл бригадăра, вуншар çапăçусенче хăйне пĕр шелмесĕр, паттăрла çапăçнă. Çак кунсенче вăл Арагонири фронтра вилнĕ.

Çакăн çинчен итальйанĕцсен фашисăма хирĕçле „Ла воче делви итальйани" хаçачĕ çине çырса пĕлтерекен йулташĕсем, çак Калабринчен килнĕ 32 çулхи Доменико Начито хресчен мĕнле вилни çинчен каламаççĕ. Анчах вĕсем хăйсем çĕнтерессине шанса, тĕнчери фашисăма хирĕç хăйсен йулташĕ пекех çапăçма сăмах парса пуçĕсене тайаççĕ.

К Ĕ С К Е Н

● Нью-Йоркра хаклă тир промышленнăçĕнчи 20 пин рабочи забастовкă тунă. Вĕсем ĕçукçине ÿстерме тата предпринимательсенчен Германипе Йапони таварĕсене бойкот тума ыйтаççĕ.

● Дÿсселдорф хулинче (Германи) полици 100 çынна йахăн, пуринчен ытла рабочисене, арĕсленĕ. Арĕсленисем хушшинче йăвăр чирленĕ пĕр хĕрарăм пулнă, вăл тĕрмерех вилнĕ.



Ÿкерчĕк çинче: Испанин Леридă хулинчи (вăл фронтран айакра) фашисла авиаци бомбă пăрахса амантнă ачасем.

(Союзфото).

Испанири фронтсенче

Хĕвелтухăç фронтĕнче йулашки виçĕ кун хушшинче çапăçусем пĕр чарăнмасăр пулса пыраççĕ Мартăн 31-мĕшĕнче Леридă хули çывăхĕнче пысăк çапăçу пулса иртнĕ. Кунта республиканĕцсем пăлхавçăсем хĕссе пынине чарса лартнă.

Теруел районĕнче республиканĕцсем халĕ те наступлени туса пыраççĕ. Хире-хирĕç тытăçса çапăçнă хыççăн, вĕсем Азор йатлă йала йышăннă тата пăлхавçăсен 70 салтакне тыткăна илнĕ. Республикă чаçĕсем Альбаррасинран (Теруелрен çурçĕрпе хĕвеланăçнелле) 15 километрта тăраççĕ.

Ытти фронтсенче улшăнусем пулман.

(ТАСС)

Пĕтĕм вăйа—фашисăма çĕмĕрсе тăкма!

Мадрид провинцинчи халăх фрончĕн организацисен ĕçтăвакан комитечĕ, правительствă пуçлăхĕ Негрин чĕнсе калание йышăнса, республикă çарне хăйсен ирĕкĕпе кайакансене пухас тĕлĕшпе пысăккăн пулăшса ĕçлеме йышăннă. Çамрăксен социалисла пĕрлешĕвĕн союзĕн çара хăйсен ирĕкĕпе кайаканĕсене Комитет шефа илме йышăннă. Çар влаçĕсемпе граждăн влаçĕсем пĕрле Комитет çара хăйсен ирĕкĕпе кайакансене çыракан пунктсене нумайлатса тата вĕсене çар ĕçне вĕрентмели вырăнсене йышлăлатса пырат.

Правительствă вăрçă тĕлĕшпе туса пыракан ĕçсене пулăшасси:

„Пĕтĕм вăйа—фашисăма çĕмĕрсе тăкма!" текен лозунгпа пулса пырат.

(ТАСС).

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетекенсемпе йĕтĕн акса тăвакансем Пĕтĕм Союзри йалхуçалăх выставкине хутшăнаççĕ

Пĕтĕм Союзри йалхуçалăх выставкин Комитечĕ выставкăна чи малтан хутшăнакан колхозсенчи 4 çынна фермипе 9 сурăх фермин тата выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре малта пракансен 115 çын спискине çирĕплетнĕ.

Выставкăна хутшăнаксен производствăлă кăтартăвĕсем социалисăмлă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри ăстаççен калама çук пысăк çитĕнĕвĕсем çинчен калаççĕ. Архангельск облаçĕнчи Холмогор районĕнчи Коминтерн йачĕпе тăракан колхозри ĕне сăвакан Бутаковă йулташ хăй пăхакан кашни ĕнерен 6.350 литр сĕт суса илнĕ. Холмогорти племхозри ĕне сăвакан Опаринă-Лыткинă йулташ пĕр ĕнерен вăтамшутпа 7.326 литр сĕт илме пултарнă.

Çавнашкалах выставкăна хутшăнма йĕтĕн акса тăвакан 9 колхозпа йĕтĕн акса тăвас ĕçре тата йĕтĕн татас ĕçре малта пыракан 36 çын права илнĕ Малта пыракансем хушшинче Архангельск облаçĕнчи Подосиновски районри „Гром" колхозри звеновод Попов пур. Вăл пĕр гектартан 12,3 центнĕр пысăк пахалăхлă йĕтĕн сÿсĕ туса илнĕ, житомир облаçĕнчи Овруч районĕнчи Советсен 7-мĕш сиесĕ йачĕпе тăракан колхозри йĕтĕн акса тăвакан ăстаç Дубок йулташ хăйăн звенипе пĕр гектартан 12,75 центнĕр йĕтĕн сÿсĕ туса илнĕ.

Леваневский самолетне шырани

Апрелĕн 1-мĕшĕнче летчиксем Котовпа Бицкий йулташсем „П-5" самолетсемпе Тихайа бухтăран (Франц-Иосиф Çĕрĕ) Леваневский йулташăн „Н-209" самолетне шырама вĕçсе тухса кайнă.

Самолетсем сывлăшра 8 сехет хушши вĕçнĕ. Вĕсем Тихайа бухтăна лайăххах анса ларнă.

Вĕçнĕ хушăра вĕсем нимĕн те тупса палăртайман.

(ТАСС).

ФОЙЕСЕНЧЕ

Рабочи-и вăл, служăщчи-и, вĕренекен йе преподавател, пур пĕр, кашни пушă вăхăта усăллă ирттерме тăрăшат. Ăна валли, вăл Шупашкарта пурăнат пулсан, кунта Строительсен клубĕ, Кино-театр, Академи театрĕ пур. Ăçта кайас килет, кино йе спектакль курас килет-и унăн—унта кайма пултарат.

Хăшĕ театăра кино йе спектакль пуçланас умĕн çур сехет малтан пырат. Ăна валли унта, театăр фойинче, мĕн те пулсан кирлĕ. Ку йенпе кино-театăр иккĕмĕшпе виççĕмĕш сеанссем умĕн фойере Чăвашсен Государствă академи театрĕ тата Государствă филармонийĕ вăййепе концертсем пама пуçларĕ. Аван. Унпа килĕшетпĕр. Уншăн ырламала çеç.

Апла пулсан, ку концертсен программи пирки каламала пулат. Академи театрĕн фойере паракан концерт программи „телеграф", пĕчĕк гармоньсемпе вылйаса тата частушкăсем йурласа парассинчен тăрат. Ку программă мĕнле улшăнса пынин уйрăмлăхĕ те паллă. Хăшпĕр кун „телеграф" пирки каланă чухне телеграммăсем памали „Морзе" аппаратпа ĕçленĕ пек шаккаççĕ. Тепĕр чухне икĕ артис хирехирĕç тăрса нимĕнле „морзеле фигурăсемсĕр" вуласа параççĕ. Пĕтĕм программă улшăнни те çакăнта пулат.

Частушкăпа та çавăн пекех. Йулашки вăхăтра частушкă вĕçне тата тепĕр сыпăк хушса „çĕнетсе" йурлама тытăнчĕç. Епĕр йурлатпăр, есĕр уншăн (пĕрмайах çав программăпа тухнăран пулмала ĕнтĕ) кăнтел ан тăвăр, тесе хушса калама пуçларĕç.

Гармоньĕсем те çавсемех. Вĕсен кĕвви те улшăнмаст.

Пĕр сăмаха никамăн та темиçе хут итлес килмест. Ăна валли кашни куллен çĕнĕ йурă, çĕнĕ музыкă кирлĕ. Ăна вĕсенчен ыйтма тивĕçлĕ.

Ку тата кино-театăрти фойере концертсем паракан Чăвашсен Государствă филармонине те тивет. Вăл та çĕнĕ музыкăсем памаст. Йаланхи пĕр программăпа пĕр пекех тухат.

Апла-тăк, çакăн пек ыйту пулма пултарат. Чăвашсен Государствă хорĕ кино-театăрти фойена концертпа сайра хутра кăна тухат. Ăçта унăн уйрăм йурлаканĕсем? Академи театрĕ те частушкăпа „телеграфсăр" пуçне тата урăх та нумай памала. Вĕсем ку программăна халех çĕнетме тивĕçлĕ.

Академи театрĕ кăçал хăй йубилейĕ вăхăтĕнче театр ĕçĕсене кăтартакан выставкă организацилерĕ. Халь тата Спиридонăв художникĕн пултарулăхне сăнас майпа организациленĕ выставкă ĕçлет. Академи театрĕн кăçал хăйĕн фойинче тунă ĕçĕ пĕтĕмпе те çак пулчĕ.

Хăйсем патне халăх темĕн чухлĕ спектакль курма пырат. Вĕсене валли унта нимĕн те хатĕр мар. Кăçал хĕл касса та вĕсем унта кĕнекесем сутассине организацилемерĕç. Театра пыракансене валли вулав пÿлĕмĕ уçса, унта валли хаçат-журналсем çыrăнса памарĕç.

Халăх театра йуратат. Час-часах вăл унта пыма тăрăшат. Апла пулсан, вĕсене алăкранах кĕтсе илме пĕлес пулат. Вăл театра пытăр. Халь звонок пулман-ха. Çав вăхăтра вăл хаçат-журнал вулама йе пĕр-пĕр выставкă курма, апла мар пулсан, театрти фойере лайăх концерт итлеме пултартăр.

Ив. Моçейăв.

Çтена хаçат редактăрĕсен курсĕ

ПСК(б)П Шупашкар хула комитечĕ „Чăваш Коммунĕ" тата „Красная Чувашия" хаçатсен редакцийĕсемпе пĕрле, хулари çтена хаçат редактăрĕсен 5 кунлăх курне ирттерет.

Курсра вĕренекенсем мартăн 31-мĕшĕнче пирвайхи занятире ПСК(б)П Тĕпкомĕн йанвар уйăхĕнче пулса иртнĕ пленумĕн решенисем тата çтена хаçачĕсен задачисем çинчен лекци итлерĕç.

Курсăн малтанхи ушкăнĕнче 26 çын вĕренеççĕ. Вĕсем хушшинче спирт савăтĕнчи стахановкă П. Й. Карамзина, халĕ РОКК-ăн Обком инструктăрĕ пулса ĕçлет, В. С. Данилăв, П. А. Лаврентйĕв йулташсем — çтена хаçатĕнче 10 мĕш çул ĕçлекен коммунисcем.

Малтанхи ушкăнри редактăрсене вĕрентсе кăларнă хыççăн курсра вĕренме тата тепĕр ушкăн пухăнмала.

Ответлă редактăр **Н. М. СЕМЕНАВ.**

Йалхуçалăхне механизацилес ĕçе вĕрентекен

КАНАШРИ ШКУЛ

1938 çулхи апрелĕн 10-мĕшĕнчен пуçласа апрелĕн 20-мĕшĕчен МТС-сем, колхозсем тата райçĕрĕç пайĕсем панă командировкăсем тăрăх

Шоферсен уйрăмне вĕренме илет

Шкула 18 çулхисенчен пуçласа 35 çулхисем таран, пуçламĕш шкулта 4 çултан кайа мар вĕреннисене тата сывлăх йенчен шоферта ĕçлеме йурăхлисене илеççĕ.

Вĕренмели срук 5 уйăх.

Зайавленипе пĕрле çакăн пек документсем кирлĕ:

1) Вĕрентнĕшĕн организаци тÿлеме пулнă обйазательствă (колхозсенчен);
2) Çар служби пирки справкă;
3) Вĕренни çинчен справкă;
4) Сывлăх çинчен тухтăр панă хут;
5) Миçе çултине кăтартакан свидетельствă;
6) Командировкă паракан организацирен илнĕ характеристикă;
7) Çарапуçăн ÿкернĕ фото-картăчкă 6 штук;
8) Паспăрт,—хăйĕнпе пĕрле пулмала.

Вĕрентме илнĕ чух вырăс чĕлхипе тата математикăпа пĕлĕве тĕрĕслеççĕ.

Шкула илнисене пурне те çтипенди, выртса-тăмали хатĕрсем параççĕ, общежити тата столовăй пур.

Колхозсем командировкă парса йанă çынна шкула вĕрентме йышăннă хыççăн, вăл çынна вĕрентес пирки шкулпа договăр тумала, ун хыççăн вара колхозсен вĕрентнĕшĕн тÿлемели укçана Госбанкăн Канашри уйрăмне 155/1136-мĕш № текущчи счот çине хываççĕ.

Шкул дирекцийĕ.

1937 çулхи декабĕрĕн 31-мĕшĕнче Центросойуз президиумĕ тата кăçалхи мартăн 21-мĕшĕнче Чăвашсойуз президиумĕ йышăннă постановленисем т ă р ă х

Чăвашсойузăн Улатăрти тата Çĕмĕрлери таварсем тăратакан базисене пĕтермеле тунă.

Организацисен, учрежденисен тата уйрăм çынсен ку базăсен ĕçĕсем тăрăх претензисем пур пулсан, 1938 çулхи апрелĕн 20-мĕшчен Ликвидкома тăратмала.

Улатăрти бази—УЛАТĂР хули, ЧАССР.
Çĕмĕрлери бази—ÇĔМĔРЛЕ хули, ЧАССР.

Кăтартнă срук иртсен нимĕнле претензи те йышăнмаççĕ.

3—1

Пахча-çимĕç хатĕрлекен сойузăн Чăваш республикинчи кантурне

Йалан ĕçлеме:

1. Економист-финансист,
2. Економист-статистик,
3. Ответлă исполнител

(катка-пичке, йĕшчĕксем хатĕрлес ĕççене туса пыма)

К И Р Л Ĕ.

А д р ĕ с: Шупашкар, Свердлăв урамĕ, 27.

Пахча-çимĕç хатĕрлекен сойуз.

Академи театрĕнче

Апрелĕн 3-мĕшĕнче

Вырăсла спектакль

Н. В. ГОГОЛЬ

РЕВИЗОР

(5 пайлă комеди)

Аслă режиççор Г. В. СТРАНСКИЙ лартат.

Художник И. Н. САПОЖНИКОВ.

Талон № 156.

АНОНС! П. Н. Осипăв **АЙДАР**

Рахманăв **ПРОФЕССĂР ПОЛЕЖАЙĔВ**

лартма хатĕрленеççĕ.

ТĂВАН ЧĔЛХЕНЕ ВĔРЕНТЕС ĔÇЕ ЙĔРКЕЛЕМЕЛЕ

Тăван чĕлхе чăваш шкулĕсенче ытти предметсем пекех кирлĕ те пĕртан правалă предмет. Пулас специалиссем культурлă тăван чĕлхене лайăх пĕлмеле. Йалти ĕççынисем йала тухтăр йе агроном, йе пĕр-пĕр ответлă çын пырса пурнăçри ĕççем çинчен чăвашла тĕрĕс чĕлхепе, ăнланмала каласа парсан, питех те кăмăллă пулаççĕ. Пирĕн халь йала айакран пынă çынсем час-часах çурма-чăваш, çурма-вырăс чĕлхепе калаçаççĕ. Ун пек чухне мĕн каланине ăнланма йăвăр. Вара темĕнле паха сăмах та халăх патне çитеймесĕрех йулат.

Пире культурлă чăваш чĕлхи кирлĕ. Кăна нумайĕш ăнланаççĕ, анчах çапах та шкулсенче тăван чĕлхене вĕрентес ĕçе тивĕçлипе йĕркелемен. Чылайĕш шкулта тăван чĕлхе „ытахальтен" кĕртнĕ предмет вырăнче тăрат. Чăваш чĕлхине вĕрентекен учительсем те, çавнашкалах çутĕç органĕсем те çак предметăн ответлăхне сахал туйаççĕ.

Чăваш чĕлхипе вĕрентме халĕ шкулсенче учебникпе грамматикă кĕнекисем çук. Грамматикăна нумай çул хушши халăх тăшманĕсем—буржуалă националиссем туса пынă. Вĕсем кунта чăваш чĕлхин саккунĕсене тĕпренех аркатса пĕтернĕ. Халĕ сăтăрла ĕççен йулашкийĕсене пĕтермеле, чĕлхе саккунĕсене çирĕп йĕркене кĕртмеле. Анчах ку ĕçе тума тытăнманпа пĕрех. Грамматикăна çеç мар, йулашки вăхăтра, саккунлă орфографи правилисене те пĕтĕмпех пăтраштарса йачĕç. Вĕçне-йĕрне тупма хĕн.

Чăваш чĕлхине вĕрентмели программăсене çырса кăларни чылай пулат ĕнтĕ. Çĕнĕ программăсем çук. Паллăх çакнашкал йĕркесĕрлĕхе пула учителĕн ĕçĕ питех те йăвăрланат. Чылайĕш учительсем, чăн та, çук тенипех лăпланса лараççĕ. Çÿлтен учебник кĕтсе, хăйсем тĕллĕн нимĕн те тумаççĕ.

Ĕçе каплипе хăварма йурамаст. Çутĕç халăх комиссариачĕн чăваш грамматикипе учебниксене хăвăртрах кăлармала, учительсен те пур пек материалсемпе усă курса чăваш чĕлхине çирĕп расписани тăрăх вĕрентсе пымала.

Тăван чĕлхе йулса пыни учительсенчен чылайах килет. Хăш-пĕр учительсем, чăваш чĕлхине ахалех пĕлетпĕр, пирĕн вырăс чĕлхине çеç лайăх вĕренмеле, теççĕ. Çав вăхăтрах хăйсем чĕлхене тÿсме çук пăтратса калаçаççĕ. Сăмахран, Ишлей, Шупашкар, Туртаркас районĕнчи учительсем вĕрентнĕ чух чăваш литературин чĕлхипе питех те сахал калаçаççĕ. Çавăн пирки ачасем те диктант, изложени, сочинени çырнă чух сăмахсене тĕрĕс мар çыраççĕ, чĕлхе саккунĕсене пăсаççĕ. Тĕслĕхшĕн акă вĕсем çырнă пуплевсене илсе пăхар: „çырмана шу аннă пирши епĕ сан пата пураймарăм". „Сирĕн аçу утпа вутă илме карĕ-и?" „Ута вутă пар!"

Тĕрĕс литературă чĕлхипе çапла çырмалаччĕ: „Çырмана шыв аннă пирки епĕ сан патна пырайманăм". Сирĕн аçу лашапа утă илме кайрĕ-и?" „Лашана утă пар!"

Учитĕл ачасем çырнă тетратсене тĕрĕслет, анчах та час-часах вăл кун йышши йанăшсене тÿрлетмесĕрех хăварат. Ку вара ачасене çĕнĕ йанăшсем тума пулăшат.

Тĕрĕс çырма пĕлесси грамматикăна пĕлнинчен килет. Учительсен хĕллехи конференцийĕсенче чăваш чĕлхине вĕренмели плансемпе паллаштарчĕç. Çав плансенче мĕнле материалсемпе усă курмалине, ĕçе мĕнле йĕркелемелине кăтартса панă. Паллах, ку çырлахтарма пултараймаст. Çапах та, план çумне учительсен пуçарулăхне хушсан ĕç тухмала. Кашни учителĕн чăваш чĕлхин саккунĕсене хăйĕн лайăх пĕлсе тăмала. Чăваш грамматикине çине тăрсах вĕрентмеле, ачасене çырулăх ĕçне хăнăхтармала.

Ку тĕлĕшрен илемлĕ литературă пысăк пулăшу пама пултарат. Ачасем чăвашсен илемлĕ литературипе интересленеççĕ. Çак интереса тивĕçлипе йĕркелени кирлĕ. Епĕ ачасене илемлĕ литературă вулама çакăн пек хăнăхтартăм. Уроксем хыççăн ачасене пĕр-икĕ хутчен 15—20 минутлăха хăварса, уйрăм кĕнекесен содержанийĕ çинчен кĕскен каласа патăм. Ачасем кăмăлласа итлерĕç. Унтан шкулти библиотекăран ачасене калавсем, сăвă кĕнекисем салатса пара пуçларăм. Ачасем мĕн вуланине уйăхра виçĕ хутчен пухăнса сÿтсе-йаватпăр. Кунсăр пуçне, кашни вĕренекен ирхине, уроксем пуçланиччен, хăй вулани çинчен хăйĕн йулташĕсене каласа парат. Ку ĕç пире тăван чĕлхепе тĕрĕс çырма, чĕлхене пуйанлатма пулăшат.

Ачасем вулаççĕ, учителĕн хăйĕн те, вырăс литературипе пĕрлех, чăваш литературине те тăрăшса вуламала, çырăнса илмеле. Пирĕн нумай шкулсенче библиотекă питех те чухăн. Ачасем вуланă çемĕн ытларах кĕнеке ыйтаççĕ. Çакна чăваш писателĕсен те, учительсен те манма йурамаст. Писательсен çĕнĕрен-çĕнĕ кĕнекесем çырса кăлармала, учительсен вĕсене шкул валли илсе пымала.

Тăван чĕлхене вĕрентес ĕçе йĕркелемеле, Çутĕç халăх комиссариачĕн чăваш чĕлхипе литературине вĕрентме кирлĕ кĕнекесене хăвăртрах кăларса, вĕсене шкула çитермеле.

Учитĕл Ф. А. Шапăшникăв.

„Чăваш Коммунĕ" çырăнса илмели хаксем: 12 уйăха—30 т., 6 уйăха—15 т., 3 уйăха—7 т. 50 пус, 1 уйăха—2 т. 50 пус. Алçырăвĕсене кайала памаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 167. Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ № 301. Тираж 16.250 экз. П. б. 85—94 см. 1—1 п: л